ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1956 çул
Февраль
1
ЮНКУН
№ 23 (9702)
Хакĕ 20 пус.
38-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

ТАВАН ÇЕРШЫВРА (1 стр.).
Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. М. Краснов.—Идеологилле ĕçе лайăхлатма тăрăшатпăр (2 стр.).
Коммунистсен партийĕн вăйĕ массăсемпе тачă çыхăнса тăнинче (2—3 стр.).
КПСС XX-мĕш СЪЕЗЧĔ УМĔН (2 стр.).
КОЛХОЗСЕНЧИ ОТЧЕТПА СУЙЛАВ ПУХĂВĔСЕМ. В. Васильев, А. Николаев.— Хуçалăхăн кашни отрасльне хăвăрт аталантарни кирлĕ (3 стр.).
Ялсенчи суту-илĕве лайăхлатмалла (3 стр.).
РЕДАКЦИЕ КИЛНĔ ÇЫРУ. А. Ильин.—Йывăç сутакан складра йĕрке тумалла (3 стр.).
М. Павлов.—Либери Республики (4 стр.).
Чехословакири халăхсем Китай Халăх Республикине панă парне (4 стр.).
Иран парламенчĕн делегацийĕн пуçлăхĕ Совет Союзне килсе кайни çинчен (4 стр.).
Хатояма Япони парламенчĕн сессийĕнче тухса калани (4 стр.).
Кăнтăр Вьетнамри сепаратнăй суйлава хирĕç. Ханой хулинчи митинг (4 стр.).
Кипр утравĕ çинчи лару-тăру (4 стр.).

Социализмла экономикăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ патне!

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ертсе пыракан совет халăхĕ хăйĕн пултарулăх ĕçĕнче çултан-çул çĕнĕ чаплă çитĕнÿсем тăвать. Çакна ăна СССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1955 çулхи государство планне тултарни çинчен ĕнер «Правда» хаçатра пичетлесе кăларнă СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй статистика управленийĕ пĕлтернинчи цифрăсем уççăн та ĕнентерÿллĕн кăтартса параççĕ.

1955 çулта, пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн юлашки çулĕнче, пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана промышленность 103 процент тултарнă.

Юлашки вăхăтра партин Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ промышленность ĕçне лайăхлатас тĕллевпе питĕ паха мероприятисем туса хатĕрлерĕç. КПСС Центральнăй Комитечĕн июльти Пленумĕ производствăна пур енĕпе те ÿстерессишĕн пыракан кĕрешÿĕн конкретлă программине палăртса хучĕ. Çак программăна пурнăçласа пыни иртнĕ çул промышленноçа, пуринчен малтан йывăр индустрие, малалла вăйлатма, çак никĕс çинче вара халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерме май пачĕ. 1955 çулта ССР Союзĕн пĕтĕм промышленноçĕ туса кăларнă продукци, 1954 çулхипе танлаштарсан, 12 процент ÿсрĕ.

Пĕтĕм халăхăн социализмла ăмăртăвĕ татах та анлăрах сарăлчĕ. Оборудованипе усă курасси чылай лайăхланчĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес тĕллевпе панă заданисене, çавăн пекех тупăшсем илмелли плана ирттерсе тултарнă. Промышленность предприятийĕсенче, транспортра, стройкăсенче ĕçе кĕртнĕ изобретенисем, техникăна лайăхлатас тĕллевпе тунă ĕçсем тата рационализаторла сĕнÿсем пĕр миллиона яхăн шутланаççĕ.

Социализмла экономика пĕр вĕçĕмсĕр ÿсни вăл çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртнипе пулса пырать. Иртнĕ çул автоматикăна, телемеханикăна, радиотехникăна, электроникăна тата наукăпа техникăн ытти çĕнĕ çитĕнĕвĕсене производствăна кĕртсе пынă, атом энергийĕпе мирлĕ тĕллевсенче усă курас тĕлĕшпе ĕçсем туса ирттернĕ.

Малта тăракан техникăна ĕçе кĕртни, рабочисен квалификацине ÿстерни план тăрăх ĕç тухăçлăхне ÿстерме кăтартса панă заданисене пурнăçлама май пачĕ: 1954 çулхипе танлаштарсан, ĕç тухăçлăхĕ промышленноçра 8 процент, строительствăра 10 процент ÿсрĕ.

Пĕтĕм халăх партипе правительство ялхуçалăхне пĕрмаях вăйлатса пыма палăртнă программăна пурнăçлассишĕн кĕрешни çултан-çул паха результатсем парать. Тырпул акса тăвакан çĕр лаптăкĕсем нумай пысăкланчĕç, вĕсен структури лайăхланчĕ. Халиччен сухаламан тата нумай вăхăт хушши сухаламасăр выртнă çĕрсемпе ăнăçлă усă курма тытăнни совет халăхĕн паллă та пысăк çитĕнĕвĕ пулчĕ: 1954—1955 çулсенче халиччен сухаламан тата нумай вăхăт хушши сухаламасăр выртнă çĕрсене 33 миллион гектар сухаланă.

Казахстанра тата хĕвелтухăçĕнчи ытти чылай районсенче çанталăк условийĕсем начар пулчĕç пулин те, пирĕн çĕршывра 1954 çулхинчен чылай нумайрах тĕштырă пухса кĕртнĕ. Çав шутра 3,6 хут нумайрах кукуруза туса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илесси ÿсрĕ. Продуктсем паракан мĕнпур йышши выльăхсен йышĕ нумайланчĕ.

Иртнĕ çул чи çĕнĕ техникăпа пуянлатнă 800 ытла пысăк предприяти ĕçе кĕчĕ. Пысăк гидроэлектростанцисем чылай туса лартнă. Куйбышев гидроэлектростанцийĕн пĕрремĕш агрегачĕ промышленность токĕ пама пуçларĕ. Металлурги, çĕр кăмрăк, нефть, хими, машинăсем тăвакан, çăмăл, апат-çимĕç промышленноçĕсен тата промышленноçăн ытти отраслĕсен çĕнĕ предприятийĕсем продукци туса кăларма тытăнчĕç.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви хулапа ялти ĕçченсен ÿссе пыракан материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Наци тупăшĕ чылай ÿснĕ никĕс çинче иртнĕ çул рабочисен, служащисен тата хресченсен тупăшĕсем ÿсрĕç. Халăха государство шучĕпе паракан тĕрлĕ тÿлевсемпе çăмăллăхсем ÿснĕ. Колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх продуктсем тата укçа чылай нумайрах пама пуçланă.

Иртнĕ çул социализмла культурăн пур отраслĕсенче те çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Пĕлтĕр аслă шкулсемпе специальнăй вăтам шкулсем 640 пине яхăн—1954 çулхинчен 70 пин çамрăк специалист нумайрах вĕрентсе кăларнă. Хальхи вăхăтра Совет Союзĕнче инженерсем, техникăлла интеллигенци капитализмла кирек хăш çĕршывринчен те нумайрах. Çакă вăл—совет стройĕн питĕ пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕри.

Тавар çаврăнăшĕ вăйланчĕ, пурăнмалли çуртсем тăвас ĕçе укçа-тенкĕ хывасси ÿсрĕ. Пĕр çулталăк хушшинче хуласемпе рабочи поселоксенче пурĕ 35 миллион тăваткал метр лаптăк чухлĕ пурăнмалли çуртсем тунă, ялла вырăнсенче 600 пин пÿрт ытла лартнă.

Хулапа ялти ĕçсыннисем пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн юлашки çулĕнчи хăйсен ĕçĕн итогĕсене патриотла туйăмпа савăнса палăртаççĕ, çав вăхăтрах вĕсем халиччен тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. Коммунистсен партийĕ совет çыннисен вăйĕсене хуçалăхпа культура строительствинчи çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн кĕрешнĕ çĕре пĕтĕçтерет. Улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе партин XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен КПСС Центральнăй Комитечĕ туса хатĕрленĕ проектне рабочисем, колхозниксем, интеллигенци çав тери кăмăлласа кĕтсе илчĕç. Партин XX-мĕш съезчĕ ячĕпе пыракан ăмăртура промышленность работникĕсем, ялхуçалăхĕнчи ĕçченсем производствăн çĕнĕ резервĕсене палăртаççĕ, пире малалла кайма чăрмантаракан çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес тесе, хăйсен пĕтĕм вăйне хурса тăрăшаççĕ.

Иртнĕ çул хăшпĕр министерствăсем государство планĕнче çирĕплетнĕ пĕтĕм номенклатура енĕпе продукци туса кăларма кăтартса панă заданисене пурнăçлаймарĕç. Вĕсен шутне Хура металлурги, Тĕслĕ металлурги, Çĕр кăмрăк промышленность, Хими промышленность, Йывăр машиностроени, Вăрман промышленность, Пулă промышленность министерствисемпе ытти чылай министерствăсем кĕреççĕ. Строительство организацийĕсен ĕçĕнче питĕ пысăк çитменлĕхсем пур.

Промышленноçра, иртнĕ çулхи итогсем кăтартса панă тăрăх, калама çук пысăк резервсем пур. Çĕр кăмрăк шахтисенче—сăрт-ту техникипе, нефть промыслисенче—нефть кăлармалли шăтăксем тумалли оборудованипе, вăрман хатĕрленĕ çĕрте—машинăсемпе тата механизмсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ-ха. Машинăсем тăвакан нумай заводсенче оборудовани питĕ нумай вăхăта ĕçсĕр тăрса ирттерет. 1955 çулта хăшпĕр промышленность предприятийĕсем чĕртавара, электроэнергие тата материалсене нормăра кăтартса панинчен ирттерсе расходланă, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетме тата тупăшсем илме çирĕплетсе панă заданисене пурнăçламан. Çаксене вĕсене урăх тÿссе тăма çук.

Производствăн чылай отраслĕсенче çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртесси кая юлса пырать. Сăмахран, машинăсем тăвакан предприятисем иртнĕ çул пысăк тухăçлă ĕçлекен машинăсемпе оборудовани туса кăларма вĕренсе çитесси вăраххăн пулса пынă. Хура металлурги завочĕсенче прокатăн перекетлĕ, авнă профилĕсене туса кăларасси çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе сарăлса пырать. Çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕнче çĕнĕ оборудованипе тата чи лайăх технологи процесĕсемпе кирлĕ пек анлăн усă курмаççĕ.

Ялхуçалăхĕнче йĕтĕн-долгунец акса пухса кĕртес, кукуруза, çĕрулми, сахăр кăшманĕ, çĕр мамăкĕ, утă пухса кĕртес тата силос хывас ĕçсене механизацилесси кая юлса пырать. Выльăх-чĕрлĕх фермисенчи йывăр ĕçсене ытла та çителĕксĕр механизациленĕ. Нумай МТС-сенче тракторсемпе тата машинăсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ.

Задача çакăнта пулать: çак çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле, хуçалăха ертсе пырассине лайăхлатмалла, ĕçĕн мĕнпур пахалăх показателĕсене нумай лайăхлатмалла. Çак кунсенче союзлă республикăсенчи Коммунистсен партийĕсен съезчĕсемпе облаçсенчи парторганизацисен конференцийĕсем пулса иртрĕç, хальхи вăхăтра парти активĕн пухăвĕсем, рабочисемпе колхозниксен массăллă пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Вĕсенче КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проектне активлăн сÿтсе яврĕç тата халĕ те çавăн пекех сÿтсе яваççĕ. Директивăсен проектне сÿтсе явнă чухне производствăн çĕнĕ резервĕсене палăртаççĕ, халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсене татах та хăвăртрах ÿстерме чăрмантаракан сăлтавсене хытă критиклеççĕ.

КПСС XX-мĕш съезчĕ уçăлас кун çывхарса килет. Çак историлле событие пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисем 1956 çулхи плана—улттăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕн планне—тултарассишĕн пыракан кĕрешÿри çĕнĕ çитĕнÿсемпе паллă тума тăрăшаççĕ. Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕ—пирĕн коммунизм строительствинчи аслă çĕнтерÿсене организацилесе тата хавхалантарса пыраканĕ тавра тачă пĕтĕçсе тăрать.

(«ПРАВДА» хаçатăн январĕн 31-мĕшĕнчи умстатьинчен).

СЫСНА АШĔ ВИÇĔ ХУТ НУМАЙРАХ, ПАНĂ

КПСС XX-мĕш съездне хатĕрленнĕ кунсенче Латви республикинчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем аш-какай туса илес ĕçре хăшпĕр çитĕнÿсем тунă. Çĕнĕ хуçалăх çулĕнче вĕсем государствăна 70 пине яхăн сысна панă. Кĕллехи виçĕ уйăх хушшинче государствăна иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен виçĕ хут нумайрах аш-какай панă. Республикăри колхозсем самăртма татах 30 пин сысна тăратнă. (ТАСС).

Тăван çĕршывра


Кострома. Молотов ячĕпе тăракан йĕтĕн пир-авăр тĕртекен фабрика пиллĕкмĕш пилĕк çуллăхра планран ирттерсе 43 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Халĕ предприяти коллективĕ КПСС XX-мĕш съезчĕ ячĕпе ĕç вахтине тăнă. Коллектив ăнăçлă ĕçлет.

Укерчĕк çинче: Г. Морозова ткачиха. Вăл партин XX-мĕш съезчĕ ячĕпе ĕç вахтине тăнă, ĕç нормине 130—140 процент тултарать.

Л. Великжанин фотоÿкерчĕкĕ.
(ТАСС фотохроники).

Белгород облаçĕ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ

1955 çулхи ĕçсен итогĕсем тăрăх Белгород облаçне Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма çирĕплетнĕ.

Облаçра тĕштырă культурисен тухăçлăхĕ, 1953 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ÿснĕ. Сахăр кăшманĕ чылай нумайрах пухса кĕртнĕ. 1955 çулта хĕвелçаврăнăш тухăçлăхĕ 1954 çулхинчен икĕ хут çурă ытларах пулнă.

Тĕп вырăнта тăракан мĕнпур культурăсене пысăк тухăçлă туса илни колхозсен тупăшĕсене ÿстернĕ. Ĕçкунĕсем тăрăх укçа тата тырă икĕ хута яхăн нумайрах параççĕ. (ТАСС).

ÇĂМĂЛ ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ÇĔНĔ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ

Кишиневри 2-мĕш номерлĕ трикотаж фабрикин çĕнĕ корпусне туса пĕтерчĕ. Унта лайăх механизациленĕ çĕвĕ цехĕпе рашельнăй цех тунă.

Кишиневра çип арлакан 50 пин йĕкеллĕ фабрика тума палăртнă. Вăл республикăри мĕнпур трикотаж предприятийĕсем валли çип парса тăракан фабрика пулать. Бендеры хулинчи çĕнĕ пир-авăр фабрики çулталăкра çур миллион тăваткал метр ковер тĕртсе кăларма пуçлать. Бендеры хулинчи пурçăн комбиначĕ питех те пысăк предприятисенчен пĕри пулать.

Кишиневра атă-пушмак фабрики, Тираспольре çĕнĕ фабрики тăваççĕ.

Пилĕк çул хушшинче Молдавире çăмăл промышленноçăн вунă пысăк предприятине туса лартма палăртнă. (ТАСС).

Мускав облаçĕнчи парторганизации конференцийĕ

Январĕн 28-мĕшĕнче Мускав облаçĕнчи парторганизацин XII-мĕш конференцийĕ хăйĕн ĕçне туса пĕтерчĕ. Конференци столицăпа облаçри коммунистсен отчетлă тапхăрти пысăк ĕçĕн итогĕсене тунă.

Конференци ĕçне делегатсем активлă хутшăннă, çитменлĕхсене ĕçлĕн критикленĕ. КПСС обкомĕпе ревизи комиссийĕн отчетлă доклачĕсене сÿтсе явнă чухне делегатсем промышленноçпа ялхуçалăхне малалла вăйлатас, партилле ĕçе лайăхлатас ыйтусем çине питĕ тимлĕ пăхнă.

Конференци пурте пĕр шухăшлă пулнипе, парти обкомĕн ĕçне çителĕклĕ тесе йышăннă, ревизи комиссийĕн докладне çирĕплетнĕ.

Конференци йышăннă резолюцире çакна шанса тăни çинчен каланă: партин Центральнăй Комитечĕ улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проектĕнче кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе облаçри парторганизацири коммунистсем тата та хастарлăрах тăрăшса ĕçлĕç, Мускаври тата облаçри ĕçсыннисене Совет çĕршывĕн экономикипе культурине малалла ÿстерессишĕн кĕрешме мобилизацилесе пырĕç.

Конференцире партин область комитечĕпе ревизи комиссине, çавăн пекех КПСС XX-мĕш съездне кайма делегатсем суйланă. КПСС XX-мĕш съездне Мускав облаçĕнчи парторганизацирен каякан делегатсем хушшинче—Н. А. Булганин, К. Е. Ворошилов, Л. М. Каганович, Г. М. Маленков, А. И. Микоян, В. М. Молотов, М. Г. Первухин, М. З. Сабуров, М. А. Суслов, Н. С. Хрущев, Н. М. Шверник, А. Б. Аристов, Н. И. Беляев, П. Н. Поспелов, Д. Т. Шепилов юлташсем. Çакăн çинчен пĕлтерсен, конференци участникĕсем хĕрÿллĕн алă çупнă.

* * *

Мускав облаçĕнчи парторганизацин XII-мĕш конференцийĕ суйланă обком пленумĕ пулса иртнĕ.

КПСС Мускав обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма И. В. Капитонова, иккĕмĕш секретарĕ пулма Н. Ф. Игнатова, обком секретарĕсем пулма А. И. Горчаковпа О. И. Деминцевăна суйланă. (ТАСС).

Çĕнĕ гидроэлектростанци тума хатĕрленеççĕ

УСТЬ-КАМЕНОГОРСК. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра Иртыш шывĕ çинче, Семипалатинскран çÿлерехре, Шульбинск гидроэлектростанцине тума тытăнаççĕ. Унта чи çĕнĕ техникăна усă курмалла пулать. Ăна ĕçлеттерме халĕ Усть-Каменогорск хули расходлакан электроэнергирен вунă хут нумайрах энерги кирлĕ пулать. Çĕнĕ стройкăна Бухтарма гидроэлектростанцийĕпе çыхăнтарма йышăннă.

Халĕ унта гидроэлектростанци тумашкăн хатĕрленме тытăннă. (ТАСС).


Белорус ССР-ĕ. Минскри автозавод МАЗ-200 маркăллă автомашинăна урăхлатса йывăç турттармалли çĕнĕ машина туса хатĕрленĕ. Ку машина вăрманта тата лачакаллă вырăнсенче çÿреме пултарать. Машина çумĕнче вăрăм йывăçсене тиесе турттармалли прицеп пур. Машинăпа унăн прицепĕ çине 15 тонна таран груз кĕрет. Çак машинăпа прицеп çине 30 метр тăршшĕ йывăçсем тиесе турттарма пулать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: йывăç турттармалли машина заводăн автомобильсем пухмалли тата сăнаса пăхмалли цехĕн конвейерĕ çинче.

М. Минкович фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).


Свердловск. КПСС XX-мĕш съездне тивĕçлĕн кĕтсе илессишĕн ăмăртса, Уралмашзавод коллективĕ шурă шăвăç тăвакан хăватлă прокат станĕ туса хатĕрленĕ. Çак стана Магнитогорскри металлурги комбиначĕ валли тунă.

Укерчĕк çинче: прокат станĕн пĕр пайĕ.

А. Грахов фотоÿкерчĕкĕ.
(ТАСС фотохроники).

Грузири çĕнĕ гидроэлектростанцисем

Улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проектĕнче Грузири Ладжамур, 2-мĕш номерлĕ Храми, Ткибули тата Гумат гидроэлектростанцийĕсене ĕçе яма, çавăн пекех Терек çинчи Дарьял гидроэлектростанцийĕпе Риони çинчи хăватлă çĕнĕ гидроэлектростанцие тума тытăнма палăртнă.

2-мĕш номерлĕ Гумат гидроэлектростанцийĕн строительствинче халĕ агрегатсене вырнаçтарса лартаççĕ. Вĕсенчен пĕри кăçалхи февраль пуçламăшĕнче, ыттисем вара кăçал кĕркунне ток пама пуçлаççĕ. Кăçал çавăн пекех Ткибули гидроэлектростанцине те ĕçе яраççĕ.

2-мĕш номерлĕ Храми гидроэлектростанцин строительствинче нумай ĕçсем тумалла. Унта 18 километр тăршшĕ тоннель чаваççĕ. (ТАСС).

МАЛТА ПЫРАКАН ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ — ХĔРЛĔ ЯЛАВСЕМ

ВЦСПС-па Трактор тата ялхуçалăх машиностроени министерстви 1955 çулхи тăваттăмĕш кварталти социализмла ăмăрту итогĕсене тунă. СССР Министрĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Сталинградри трактор завочĕн коллективĕ илме тивĕçлĕ пулнă. Çак ялава ку коллектив вĕçĕмренех улттăмĕш хут илет. Çавăн пекех «Ростсельмаш» коллективне те СССР Министрĕсен Совечĕн ялавне памалла тунă.

Икĕ завода—Мускаври Буденный ячĕпе тăракан заводпа Куйбышеври «Автотрактородеталь» завода ВЦСПС-па министерствăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă. (ТАСС).

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ

Январĕн 30-мĕшĕнче КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотекинче хулари парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ССР Союзĕн халăх хуçалăхне 1956—1960 çулсенче аталантармалли улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проекчĕ çинчен партин обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ М. Корабельников юлташ тунă доклада активлăн сÿтсе яврĕ.

Докладчик тата тухса калакансем хулари ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, Директивăсен проектне тулли кăмăлпа, пысăк хавхаланупа кĕтсе илни çинчен каларĕç. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра Атăл çинче 800 пине яхăн киловатт хăвачĕ Шупашкар гидроэлектростанци, Хусан—Горький газопровочĕсем (газа Шупашкар хулине те кĕртмелле), трактор пайĕсем тăвакан заводра çулталăкне 40 пин тонна метал шăратакан специализациленĕ цех тума тытăнма палăртни, хăшпĕр министерствăсем республика столицинче пысăк предприятисем тума палăртни пирĕн ĕçсыннисене уйрăмах савăнтарать. Çĕнĕ пилĕкçуллăхра республика экономикипе культури малалла аталанаççĕ.

Парти активĕн пухăвĕнче пулнисем улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС Центральнăй Комитечĕ туса хатĕрленĕ Директивăсен проектне пĕр кăмăллă пулса ырларĕç. Вĕсем çак аслă программăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулăшакан паха сĕнÿсем пачĕç.

— Электроаппаратура завочĕн коллективĕ,—терĕ партком секретарĕ Цфасман юлташ,— КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проектне пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем, конструкторсем Директивăсен проектне чĕререн ырлаççĕ, ăна сÿтсе явнă чухне паха сĕнÿсем тăратаççĕ.

Çак кунсенче эпир 1955 çулхи тăваттăмĕш кварталти социализмла ăмăртăвăн итогĕсем тăрăх СССР Министрĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пирĕн заводрах хăвармалла туни çинчен пĕлтĕмĕр. Çак савăнăçлă хыпар пĕтĕм коллектива çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать. Коллектив кăçалхи плана срокчен тултарма, планран ирттерсе 4 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларма, ĕç тухăçлăхне 1955 çулхинчен 12 процент ÿстерме, рационализаторла 360 сĕнĕве производствăна кĕртме, 1.230 пин тенкĕ укçа перекетлесе хăварма обязательство йышăнчĕ.

Цфасман юлташ малалла çапла калать:

— Пирĕн завод кăларакан продукцие нумай çĕре илсе каяççĕ. Çавна май Шупашкарпа Горький хулисем хушшинчи чугун çул ĕçне лайăхлатмалла, хулара аэропорт та уçма вăхăт çитнĕ тесе шутлатпăр. Продукцие чĕркесе ăсатма картон нумай кирлĕ. Анчах картона инçетри вырăнсенчен кÿрсе килетпĕр. Сывăхри хут комбиначĕсенчен пĕринче завод валли картон тăвассине йĕркелемелле. Завода специализацилесси пирки шутласа пăхмалла.

Пир-авăр комбиначĕн директорĕ Чекмасов юлташ КПСС XX-мĕш съезчĕ ячĕпе ăмăртăва тухса илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен калать. Вăл 123-мĕш стройтрест руководителĕсене комбинатри строительство ĕçĕсене вăраххăн туса пынăшăн критиклет.

— Çĕнĕ пилĕкçуллăхăн пысăкрах та пысăк задачисене чыслăн пурнăçлама пысăк квалификациллĕ специалистсем кирлĕ,—тет педагогика институтĕнчи партбюро секретарĕ Калинин юлташ,—анчах халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсем валли пултарулă специалистсем хатĕрлес ĕçре пысăк çитменлĕхсем палăраççĕ. Вăл педагогика институчĕ наукăпа тĕпчев ĕçĕсене çителĕксĕр туса пынине кăтартса парать, РСФСР Сутĕç министерстви института лабораториллĕ ĕçсемпе вĕренÿ ĕçĕсем валли оборудовани туянма укçа сахал уйăрса панă. Студентсен хисепĕ çултан-çул ÿссе пырать. Кăçал, заочно тата каçхи уйрăмра вĕренекенсемпе пĕрле илсен, 3.650 студент вĕренме тытăнмалла. Институтăн çĕнĕ çуртне тăвасси, «Чăвашстрой» тресчĕн руководителĕсен айăпĕпе, вăраха кайнă.

— Директивăсен проектĕнче,—тет Чăваш АССР Сывлăх министрĕ Ефимова юлташ,—халăх сывлăхне сыхлассине малалла аталантарса пыма, халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕç культурине ÿстерме палăртнă. Шупашкар хулинче медицина учрежденийĕсем тăвас ĕç начар пырать. Кăçал больницăсенчи койкăсен шучĕ 240 çити ÿсмелле. Ку ĕçре эпир ССР Союзĕн тата союзлă республикăн министерствисемпе ведомствисенчен ытларах пулăшу кĕтетпĕр. «Чăвашстрой» тресчĕ (управляющийĕ Куприянов юлташ) республикăри больница строительствине чăтма çук начар туса пырать. Монтаж ĕçĕсем чарăнса ларнă.

Ефимова юлташ çакăн пек сĕнÿсем тăратрĕ: кăçал Шупашкарта сикекен чирсенчен сыватакан больница, Кировски поселокра поликлиника тума тытăнмалла, республикăри больницăна туса пĕтермелле, малашне медицина институчĕ уçма кирлĕ условисем хатĕрлемелле.

КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Шевчков юлташ Директивăсен проектне сÿтсе явнă чухне предприятисенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем производствăра усă курман резервсене нумай кăтартса пани çинчен калать. Предприяти руководителĕсем çав резервсемпе вăхăтра усă курма тăрăшмаççĕ. Хăшпĕр руководительсем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларнă. 123-мĕш стройтрестпа «Легпромстройăн» 11-мĕш номерлĕ тресчĕ пĕрлешрĕç. Анчах пĕрлешсе пысăкланнă трест çаплипех организациллĕ тапхăртан тухса çитеймест.

Шевчков юлташ кадрсен экономикăлла вĕренĕвне йĕркелес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме кирлине палăртать.

Мордкович юлташ Шупашкарта тата республикăри ытти хуласемпе районсенче культура учрежденийĕсем тăвас, вĕсем валли кадрсем хатĕрлес ыйтусене хускатать. Вăл Шупашкарта Пионерсен дворецĕ лартма кирли çинчен калать.

Пренире çавăн пекех Румянцев (123-мĕш трест), Кудряшов (Сыхăну управленийĕ), Коваленко (чугун çулăн 17-мĕш дистанцийĕ) тата Никифоров (Чăвашгиз) юлташсем тухса каларĕç.

Парти активĕн пухăвĕ СССР халăх хуçалăхне 1956—1960 çулсенче аталантармалли улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проектне пĕр шухăшлă пулса ырларĕ. Актив пухăвĕ КПСС хула комитечĕпе пуçламăш парторганизацисене Директивăсен проектне сÿтсе явнă чухне панă практикăлла сĕнÿсене пĕрлештерсе пĕтĕçтерме, проект текстне ĕçсыннисене ăнлантарса парас ĕçе малалла тата анлăрах туса пыма, КПСС XX-мĕш съезчĕ ячĕпе сарăлнă социализмла ăмăртăва вăйлатса пыма хушса решени йышăнчĕ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Идеологилле ӗҫе лайӑхлатма тӑрӑшатпӑр

КПСС Центральнӑй Комитечӗн январьти тата июльти Пленумӗсем промышленноҫпа ялхуҫалӑхне тата культурӑна малалла аталантарас тӗлӗшпе пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратрӗҫ. Ҫак задачӑсене пурнӑҫласси партилле-политикӑлла тата идеологилле ӗҫе лайӑхлатнинчен, ӑна коммунизм строительствин практикӑлла задачисемпе тачӑ ҫыхӑнтарса туса пынинчен килет.

Пирӗн кадрсем идея тӗлӗшӗнчен ӳсни, марксизм-ленинизм теорине лайӑх пӗлни партин шалтине тулашри политикине ӗҫсыннисене тӗрӗс ӑнлантарса пама, хуҫалӑхпа культура строительствине пӗлсе ертсе пыма, практикӑлла ӗҫри ыйтусене татса панӑ чухне теори кӑтартса панӑ тӑрӑх ӗҫлеме пулӑшать.

Вӑрнар районӗнчи чылай парторганизацисем юлашки вӑхӑтра коммунистсемпе кадрсене марксизм-ленинизм теорине вӗрентес тӗлӗшпе тӑрӑшарах ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Ҫӗрпел ялӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхозра КПСС историне вӗренмелли виҫӗ кружок ӗҫлет. Вӗсене темиҫе ҫул хушши ӗҫлекен пропагандистсем М. Гурьев, Н. Кириллов, А. Осипов юлташсем ертсе пыраҫҫӗ. Январӗн 20-мӗшӗ тӗлне ҫак кружоксенче 14-шар заняти ирттернӗ. Вӗренӗве вӗсем практикӑлла ӗҫпе, колхоз умӗнче тӑракан задачӑсемпе ҫыхӑнтарса пыма тӑрӑшаҫҫӗ. 9-мӗш бригадӑн бригадирӗ А. Михайлов юлташ занятисене пӗр сиктермесӗр ҫӳрет, яланах хатӗрленсе пырать. Кружокра вӗренекенсем юлташла калаҫӑва активлӑ хутшӑнаҫҫӗ.

Кружоксенче вӗренекенсенчен чылайӑшӗ коммунистсем. Вӗсем кулленхи пурнӑҫран юлмаҫҫӗ. ССР Союзӗн халӑх хуҫалӑхне 1956—1960 ҫулсенче аталантармалли улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе КПСС ХХ-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проекчӗ хаҫатсенче пичетленсе тухнӑ хыҫҫӑн колхозри коммунистсен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Вӗсем Директивӑсен проектне чӗререн ырласа, ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ. Ватӑ коммунист М. Шлыков пухура ҫапла каларӗ:

— ССР Союзӗн халӑх хуҫалӑхне 1956—1960 ҫулсенче аталантармалли Директивӑсен проектӗнче ялхуҫалӑхне хӑватлӑн аталантарма палӑртнӑ. 1960 ҫулта ҫӗршывра 11 миллиард пӑт тӗштырӑ туса илмелле, аш-какай тата сӗт-ҫу туса илессине икӗ хут ӳстермелле. Ҫак пысӑк задачӑна пурнӑҫлассишӗн пирӗн, совет ҫыннисен, ҫине тӑрса кӗрешмелле. 1955-мӗш ҫулта эпир пурӗ 21 пин центнер тырӑ туса илтӗмӗр пулсан, 1960-мӗш ҫулта 25—[illegible]0 пин центнер тӗштырӑ туса илмелле. Ҫакӑншӑн пирӗн вӑй-хала шеллемесӗр ӗҫлемелле.

Коммунистсен пухӑвӗ хыҫҫӑн, тепӗр кунне, кружоксенче вӗренекенсем-агитаторсем бригадӑсенче улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе КПСС ХХ-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проектне колхозниксене ӑнлантарса пама тытӑнчӗҫ.

Артель членӗсем ҫак кунсенче уйрӑмах пысӑк хавхаланупа ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ вӗсем 1956-мӗш ҫулта ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн кӗрешеҫҫӗ: вӑрлӑхсене сортласа, вӗсене кондицие ҫитерсе хунӑ, уй-хирте юр тытаҫҫӗ, уя 10 пин лав ытла тислӗк кӑларнӑ, 100 тонна минераллӑ удобренисем кӳрсе килнӗ. Выльӑх-чӗрлӗх валли ҫителӗклӗ таран апат хатӗрлес тесе кӑҫал колхозра 300 гектар ҫине кукуруза акма йышӑннӑ, кукуруза акма чи лайӑх ҫӗр лаптӑкӗсене уйӑрнӑ. Ҫав участоксем ҫине халӗ ҫӗрнӗ тислӗк нумай кӑлараҫҫӗ. Ушмаринпа Ласкин агрономсем тата Алексеева зоотехник ертсе пыракан кружокра 100 колхозник ытла агро-зоотехникӑна вӗренеҫҫӗ.

Анчах ҫитменлӗхсем те нумай-ха. Хӑшпӗр колхозсемпе предприятисенчи, ҫавӑн пекех учрежденисенчи кружоксемпе политшкулсен занятийӗсем тепӗр чухне вӑхӑтра пулмаҫҫӗ. Крупская ячӗпе тӑракан колхозри парти историне вӗренмелли кружокра (руководителӗ А. Ухтеев юлташ, вӑлах пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ) ку тарана ҫитсе те икӗ заняти ҫеҫ ирттернӗ. Мӑшавӑш вӑрман пунктӗнчи парти историне вӗренмелли кружок та йӗркеллӗ ӗҫлемест. Коммунистсем занятисене хатӗрленсе пымаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та занятисем интереслӗ иртмеҫҫӗ.

Чылай коммунистсемпе партире тӑман кадрсем кӑҫал политикӑлла экономие, промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗн конкретлӑ экономикине харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренеҫҫӗ. Вӗсене вӗренӳре КПСС райкомӗ ҫирӗплетнӗ 34 консультант тӑтӑшах пулӑшса пыраҫҫӗ, консультацисемпе семинар занятийӗсем ирттереҫҫӗ. КПСС райкомӗн библиотеки ҫумӗнчи семинар занятийӗсем планпа палӑртнӑ вӑхӑтра пулса пыраҫҫӗ. Ӑна зооветтехникум директорӗ Р. Осипов юлташ ертсе пырать. Унта ҫӳрекенсем занятисене лайӑх хатӗрленсе пыраҫҫӗ. Анчах хӑшпӗр юлташсем, сӑмахран, райсовет исполком председателӗн заместителӗ Кудряшов, КПСС райкомӗн инструкторӗ Лаптенков, районти ҫыхӑну уйрӑмӗн начальникӗ Алексеев юлташсем семинар занятийӗсене йӗркеллӗ ҫӳремеҫҫӗ, пырсан та хӑйсен активлӑхне кӑтартмаҫҫӗ.

Идеологилле ӗҫре ялти клубсемпе библиотекӑсем тата агитколлективсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Хрущев ячӗпе, Киров ячӗпе, Ленин ячӗпе тӑракан колхозсен клубӗсенче массӑлла-ӑнлантарулла тата идеологилле ӗҫе пурнӑҫпа тачӑ ҫыхӑнтарса туса пыраҫҫӗ. Хрущев ячӗпе тӑракан колхозӑн клубӗнче артелӗн 1955 ҫулхи ҫитӗнӗвӗсене кӑтартакан тата 1956 ҫулта колхоз умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен пӗлтерекен стендсем тунӑ, клубра час-часах лекцисемпе докладсем пулаҫҫӗ, кашни пилӗк кунта стена хаҫачӗ тухса тӑрать.

ССР Союзӗн халӑх хуҫалӑхне 1956—1960 ҫулсенче аталантармалли улттӑмӗш пилӗкҫуллӑх план тӗлӗшпе КПСС ХХ-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проекчӗ ҫинчен агитаторсем бригадӑсенче калаҫусем ирттереҫҫӗ. Колхоз председателӗ Н. Петров юлташ клубра Директивӑсен проекчӗ ҫинчен доклад туса пачӗ.

Хӑшпӗр пуҫламӑш парторганизацисем идеологилле ӗҫе ҫав-ҫавах пурнӑҫран уйрӑм туса пыраҫҫӗ, пропагандӑпа агитацие хальхи вӑхӑтри конкретлӑ задачӑсемпе ҫыхӑнтармаҫҫӗ. Акӑ, тӗслӗхрен, Мичурин ячӗпе, Калинин ячӗпе, Шверник ячӗпе тӑракан колхозсенче агитацилле-массӑлла ӗҫе ҫителӗксӗр йӗркеленӗ. Кунти агитколлективсем план тӑрӑх ӗҫлемеҫҫӗ, боевой листоксемпе стена хаҫачӗсем вӑхӑтра тухса тӑмаҫҫӗ, агитаторсен семинарӗсем пулмаҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗх фермисенче агитаторсем калаҫусем ирттернине курма ҫук.

Хальхи вӑхӑтра районти агитаторсемпе пропагандистсен пысӑк пайӗ КПСС ХХ-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проектне колхозниксене ӑнлантарса парас тӗлӗшпе ӗҫлет. Районти ӗҫсыннисем Коммунистсен партийӗн ХХ-мӗш съездне ӗҫри пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн хавхаланса ӗҫлеҫҫӗ, ҫавна май социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса пыраҫҫӗ.

М. КРАСНОВ.

КПСС Вӑрнар райкомӗн пропагандӑпа агитаци пайӗн заведующийӗн заместителӗ.

КПСС ХХ-мӗш СЪЕЗЧӖ УМӖН

Шупашкарти 7-мӗш вӑтам шкулти учительсен коллективӗ КПСС ХХ-мӗш съезчӗ СССР халӑх хуҫалӑхне аталантармалли улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе паракан Директивӑсен проектне пӗтӗм кӑмӑлтан ырлать.

Ӳкерчӗк ҫинче: Шупашкарти 7-мӗш вӑтам шкулти парторганизаци секретарӗ Е. Медякова юлташ унта ӗҫлекенсене КПСС ХХ-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проекчӗпе паллаштарать.

Ф. Иванов фотоӳкерчӗкӗ.

Ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемшӗн

УЛАТӐР. Партипе правительство ялхуҫалӑхӗ умне кӑларса тӑратнӑ пысӑк задачӑсене пурнӑҫласа пырса, «Победа» колхоз членӗсем 1955 ҫулта паллӑ ӳсӗм турӗҫ. Тӗштырӑсен тухӑҫлӑхӗ малашлӑх планра палӑртнинчен чылай пысӑкрах пулчӗ, кашни гектартан вӑтам шутпа 16-шар центнер тырӑ илнӗ.

Колхозниксен иртнӗ ҫулхи ҫитӗнӗвӗсенчен чи палли—40 гектар ҫинче пысӑк тухӑҫлӑ кукуруза ҫитӗнтерни пулса тӑрать. Кашни гектартан 225-шер центнер кукурузӑн симӗс массине пухса кӗртнӗ. Кашни сӑвакан ӗне пуҫне 6-шар тонна, пӗтӗмпе 800 тонна лайӑх силос хывса хӑварнӑ.

Артель техникӑлла культурӑсенчен — йӗтӗнпе махоркӑран ҫулленех ҫӗршер пин тенкӗ тупӑш илет. Акӑ, иртнӗ ҫулта йӗтӗн 326 пин, махорка 200 пин тенкӗ тупӑш панӑ.

Юлашки ҫулсенче колхозра обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ вӑйлӑн аталанса пырать. Иртнӗ хуҫалӑх ҫулӗнче усӑ куракан ҫӗрсен кашни 100 гектарӗ пуҫне 131 центнер сӗт, 28,7 центнер аш-какай илнӗ. Выльӑх-чӗрлӗх фермисем артеле пысӑк тупӑш паракан ҫӑлкуҫ пулса тӑчӗҫ. Колхозӑн ҫулталӑкри пӗтӗм тупӑшӗ 1.400 пин тенкӗ шутланать, вӑл шутран 600 пин тенкине выльӑх-чӗрлӗх фермисенчен илнӗ.

Тупӑш пӗрмаях ӳссе пыни колхозри строительствӑна вӑйлатма май парать. Юлашки икӗ ҫул хушшинче кунта ҫӗнӗрен икӗ сысна вити, кормокухня, 400 метр тӑршшӗ ҫӳлтен сакнӑ тимӗр ҫул, клуб туса лартнӑ. Халӗ кирпӗчрен тӑватӑ ретлӗ ӗне вити тӑваҫҫӗ.

Колхоз хуҫалӑхӗ тӗрекленсе, ҫирӗпленсе пынӑ май колхозниксен пурнӑҫӗ те пуянланса, ял культури ӳссе пырать. 1955 ҫулта кашни ӗҫкунӗ пуҫне 3 килограмм тырӑ, 3 тенкӗ укҫа, 3,5 килограмм утӑ-улӑм валеҫнӗ. Выльӑх-чӗрлӗх фермисенче, уй-хирте вӑя шеллемесӗр ӗҫлекен колхозниксем ҫӗршер пӑт тырӑ, пиншер тенкӗ укҫа илеҫҫӗ.

Ҫакӑн пек колхоз ӗҫченӗсем иртнӗ ҫулталӑкра тунӑ ҫитӗнӳсем. Анчах артель ӗҫченӗсем вӗсемпе лӑпланса пурӑнмаҫҫӗ. Колхозниксен пурин те пӗр ӗмӗт—кӑҫал тата пысӑкрах ӗҫсем тӑвасси. КПСС ХХ-мӗш съезчӗ ячӗпе сарӑлса кайнӑ социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнса, колхозниксем выльӑх-чӗрлӗхе тӗрӗс-тӗкел хӗл каҫарас, ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫуракинче акма 1.170 центнер вӑрлӑх хатӗрлесе хунӑ. 800 центнер минераллӑ удобренисем кӳрсе килнӗ.

Фермӑра ӗҫлекенсем ҫӗнӗ хуҫалӑх ҫулӗн малтанхи уйӑхӗсенче пӗлтӗрхинчен чылай лайӑхрах тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ. Малта пыракан Т. Ожогина, Н. Кузовенкова тата Р. Куликова дояркӑсем кӑҫал кашни ӗнерен 3.500-шер литр сӗт суса илме обязательствӑсем йышӑннӑ. Сӗт-ҫу ферминче халӗ куллен 900—1.000 литра яхӑн сӗт сӑваҫҫӗ, кашни ӗне вӑтамран 8 литр сӗт парать.

— КПСС ХХ-мӗш съезчӗ улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе паракан Директивӑсен проекчӗ—коммунизмшӑн пыракан кӗрешӳн аслӑ программи пулса тӑрать,—теҫҫӗ «Победа» колхоз членӗсем.—Ӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешсе, эпир хамӑр вӑй-хала шеллесе тӑмӑпӑр. Тӑван парти пире яланах малалла, ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне ертсе пырать.

С. НОВИКОВ.

Семинар пулчӗ

ИШЛЕЙ. Районти ӗҫсыннисем ССР Союзӗн халӑх хуҫалӑхне 1956—1960 ҫулсенче аталантармалли улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе КПСС ХХ-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проектне пысӑк ҫӗкленӳпе сӳтсе яваҫҫӗ. Колхозсенчи агитаторсем Директивӑсен проектне ӗҫсыннисене ӑнлантарса параҫҫӗ.

КПСС райкомӗ ҫак кунсенче агитколлектив руководителӗсемпе культурӑпа сутӗҫ работникӗсен семинарне ирттерчӗ. Семинарта пулнисене КПСС Чӑваш обкомӗн пропагандӑпа агитаци пайӗн заведующийӗ Д. Абашев юлташ улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе КПСС ХХ-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проекчӗ ҫинчен доклад туса пачӗ.

КПСС райкомӗн библиотекинче Директивӑсен материалӗсемпе стенд тата улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑхри стройкӑсене кӑтартакан картта тунӑ.

Г. РАЗУМОВ.

Юлса пырассине пӗтеретпӗр

Пирӗн колхоз халиччен районта юлса пыракансенчен пӗри шутланнӑ. Иртнӗ ҫул вӑл уй ӗҫӗсене вӑхӑтра туса ирттерчӗ, государство умӗнчи парӑмсене чысӑн пурнӑҫларӗ. Колхозниксене кашни ӗҫкунӗ пуҫне 1,7-шер килограмм тырӑ валеҫсе панӑ.

Артель правленийӗн председателӗ пулма мана ҫулталӑк каялла, республикӑри колхоз председателӗсем хатӗрлекен вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, суйласа лартрӗҫ. Хуҫалӑх питӗ япӑхса кайнӑччӗ. Ҫуракинче акма государствӑран 100 центнер вӑрлӑх, колхозниксене пама тата 100 центнер тырӑ кивҫен илме тиврӗ. Фураж сахал хатӗрленӗ пирки выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма йывӑр пулчӗ.

Колхоз правленийӗпе пуҫламӑш парторганизаци организаторла мероприятисем туса ирттерчӗҫ. Машина-трактор станцийӗ кирлӗ пек пулӑшса пыни те йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пулӑшрӗ.

Тырпул тухӑҫлӑхӗ, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, икӗ хут ӳсрӗ. 1955 ҫулта 63 гектар ҫине кукуруза акнӑччӗ, унӑн ҫулҫипе тунине кашни гектартан 300 центнер, уйрӑм лаптӑксем ҫинче 600-шер центнер пухса илтӗмӗр.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ те хӑвӑрт аталанать. Утӑ-улӑм, концентратсем, силос нумай хатӗрленӗ. Иртнӗ ҫулталӑк хушшинче 100 пуҫ вырнаҫмалӑх ӗне вити, 50 пуҫ вырнаҫмалӑх лаша вити туса лартрӑмӑр. Сысна витине тӗпрен юсанӑ. Фермӑри чылай ӗҫсене механизациленӗ. Халӗ выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансене ӗҫлеме лайӑх условисем туса панӑ. Вӗсем кӑҫалхи хуҫалӑх ҫулӗнче пӗлтӗрхинчен икӗ хут ытларах сӗт тата аш-какай илме тӑрӑшаҫҫӗ.

Пирӗн колхоз юлса пырассине пӗтерме тӑрӑшать. Анчах райком, райисполком тата МТС руководителӗсем енчен колхоза пулӑшни сахал-ха. Районтан колхоза пуху е лару ирттерме килеҫҫӗ. Колхозри ӗҫсем ҫителӗксӗр пулса пынине критиклесе пӗр-ик сехет хушши доклад туса параҫҫӗ те хыпаланса райцентра тухса каяҫҫӗ. Кунашкал «пулӑшу» артель руководителӗсене пысӑк усӑ параймасть.

КПСС ХХ-мӗш съезчӗ улттӑмӗш пилӗкҫуллӑх тӗлӗшпе паракан Директивӑсен проектӗнче ялхуҫалӑхне малалла хӑвӑрт аталантарма палӑртнӑ. Ҫакӑ колхоз хресченӗсем умне чыслӑ задачӑсем кӑларса тӑратать. Пирӗн колхоз членӗсем Директивӑсен проектне чун-чӗререн ырлаҫҫӗ, вӗсем артель хуҫалӑхне тӗреклетсе пыма вӑй-хала шеллемесӗр тӑрӑшӗҫ.

С. ВЛАДИМИРОВ.

Калинино районӗнчи Маленков ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ.

Пирӗн обязательствӑсем

Иртнӗ ҫул эпир, ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӑхӑтра тата агротехника хушнӑ пек туса пынӑ май, тырпул тухӑҫлӑхне малтанхи ҫулхинчен икӗ хута яхӑн ӳстертӗмӗр, кашни гектар пуҫне вӑтамран 13,3 центнер тӗштырӑ пухса кӗртрӗмӗр. Григорьев юлташ ертсе пыракан иккӗмӗш бригада вара 60 гектар ҫинчен вӑтамран 18-шар центнер ыраш туса илчӗ. Колхозниксене иртнӗ ҫул тырпул тата укҫа-тенкӗ малтанхи ҫулхинчен чылай ытларах валеҫсе патӑмӑр.

Пирӗн колхозӑн тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерме пысӑк майсем пур. Анчах та пире малта пыракансен опычӗпе тивӗҫлипе усӑ курманни хытӑ чӑрмантарать-ха.

Коммунистсен партийӗн ХХ-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проекчӗ пирӗн колхозниксен ӗҫри хастарлӑхне татах та ытларах ӳстерчӗ. Ҫак кунсенче Директивӑсен проектне колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗнче сӳтсе яврӑмӑр. Ҫав пухура колхозниксем ҫӗнӗ те пысӑк обязательствӑсем йышӑнчӗҫ. Ҫапла, кӑҫал эпир тӗштырӑ кашни гектартан вӑтам шутпа 15-шер центнер, ҫӗрулми 200 центнер, пахча ҫимӗҫ 400 центнер туса илме пултӑмӑр, аш-какай, сӗт, ҫӑмарта илессине те чылай ӳстерме палӑртрӑмӑр.

Йышӑннӑ обязательствӑсене пурнӑҫлассишӗн колхозниксем пӗтӗм вӑй хурса тӑрӑшаҫҫӗ. Артельте социализмла ӑмӑрту анлӑн сарӑлчӗ. Уй-хир бригадисем КПСС ХХ-мӗш съезчӗ уҫӑлнӑ кун тӗлне ҫуракине пур енӗпе те хатӗрленсе ҫитесшӗн. Колхозниксем халӗ вӑрлӑх сортлаҫҫӗ, удобренисем хатӗрлеҫҫӗ. Паянхи куна уя 700 тонна тислӗк кӑларнӑ, кӑҫал эпир кашни гектар ҫине 10 тоннӑран кая мар тислӗк кӑларатпӑр. Тислӗк лайӑх ҫӗртӗр тесе, ӑна пысӑк купасем туса тата минераллӑ удобрени сапса купалатпӑр. Минераллӑ удобренисем кӑҫал 1.100 центнертан кая мар туянатпӑр, халӗ 300 центнер илсе килнӗ. Кусемсӗр пуҫне кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ те пухса хатӗрлетпӗр. Уйра мӗнпур лаптӑк ҫинче пӗр хутчен юр тытрӑмӑр. Колхоз тимӗрҫи С. Чернов юлташ плугсемпе сеялкӑсене юсаса пӗтерчӗ.

Ф. АЛЕШИН.

Канаш районӗнчи Микоян ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ.

Ӗҫ вахтинче

КАНАШ. (Хамӑр корр.). Чугун ҫул ҫинче ӗҫлекенсем, пӗтӗм совет халӑхӗ пекех, улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе КПСС ХХ-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проектне пысӑк хавхаланупа кӗтсе илчӗҫ. Ҫав документра Коммунистсен партийӗ ӗҫсыннисемшӗн тӑрӑшнине, Тӑван ҫӗршыв хӑватлӑхне татах та тӗреклетессишӗн тӑрӑшнине уҫҫӑн кураҫҫӗ.

— Парти палӑртса хунӑ ӗҫсене эпир яланах чыслӑн пурнӑҫлама хатӗр. Халӗ пире КПСС Центральнӑй Комитечӗ улттӑмӗш пилӗкҫуллӑх заданийӗсене тултарассишӗн тата ирттерсе тултарассишӗн социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса пыма чӗнет,—терӗ депори аслӑ машинист В. Фомин юлташ.—Ҫӗнӗ пилӗк ҫуллӑх плана чыслӑн пурнӑҫлассишӗн эпир хамӑрӑн пӗтӗм вӑя хурӑпӑр. Пилӗкҫуллӑха ӑнӑҫлӑ тултарни коммунизм тӑвас ӗҫре ҫӗнӗ утӑм тума май парӗ.

Фомин юлташ январь уйӑхӗнче нормӑран ирттерсе ҫӗршер тонна груз турттарса тухрӗ, техникӑлла хӑвӑртлӑха 4,6 километр ӳстерчӗ. Г. Девяткин, В. Сбитнев, Н. Бакулин тата ытти машинистсем те тухӑҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Пӑравус машинисчӗсенчен путеецсемпе составительсем, осмотрщиксемпе стрелочниксем те юлмаҫҫӗ. Съезд умӗнхи ӗҫ вахтине тӑрса, станцӑри чылай сменӑсем груз тиесе пушатмалли плана ирттерсе тултараҫҫӗ, поездсене вӑхӑтра йышӑнса пӗр минут ахаль тӑратмасӑр ӑсатаҫҫӗ.

Коммунистсен партийӗн вӑйӗ — массӑсемпе тачӑ ҫыхӑнса тӑнинче

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ хӑйӗн ХХ-мӗш съездне хатӗрленет. Партипе пӗрле нумай миллионлӑ совет халӑхӗ те съезда ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илес тесе ӗҫлет. ХХ-мӗш съезд ячӗпе пӗтӗм халӑхӑн социализмла ӑмӑртӑвӗ ҫӗнӗ хӑватпа сарӑлать, ӗҫсыннисен производствӑри тата политикӑлла активлӑхӗ ӳссе пырать.

Совет халӑхӗ Коммунистсен партине тӑван парти тесе шутлать, ӑна чунтан-чӗререн шанса пурӑнать. Вуншар ҫулхи опыт парти ӗҫӗнчи чи аслӑ закон халӑхшӑн ӗҫлесси, унӑн интересӗсемшӗн, телейӗшӗн кӗрешесси пулнине кӑтартса пачӗ.

* * *

Аслӑ Ленин марксистла партин пӗлтерӗшӗ тата ролӗ ҫинчен ҫапла ҫырнӑ: «Марксизм рабочисен партине пӑхса ӳстернипе пролетариатӑн авангардне, власа алла илме тата пӗтӗм халӑха социализм патне илсе пыма, ҫӗнӗ строй ҫул кӑтартса пыма тата организацилеме пултаракан, хӑйсен обществӑлла пурнӑҫне буржуазисӗр тата буржуазие хирӗҫле йӗркелес ӗҫре мӗнпур ӗҫсыннисемпе эксплуатаци тӳсекенсен учителӗ, руководителӗ, ҫулпуҫӗ пулма пултаракан авангарда, пӑхса ӳстерет» (Соч., 25 т., 376 стр.).

Марксистла парти—рабочи класа, мӗнпур ӗҫсыннисене кӗрешӳре ертсе пыракан штаб. Вӑл, марксистла парти, малта пыракан класӑн чи лайӑх, революцилле кӗрешӳре пиҫӗхсе ҫирӗпленнӗ, хӑйӗн класӗпе, ун урлӑ ӗҫсыннисен пӗтӗм массипе тачӑ ҫыхӑнса тӑракан представителӗсене пӗрлештерет. Ҫакӑн пек партисӗр пролетариат власа кӗрешсе илме тата обществӑна революцилле майпа ҫӗнӗлле йӗркелессине пурнӑҫлама пултарайман пулӗччӗ.

Коммунистсен партийӗ—пӗр шухӑшлӑ ҫынсен-коммунистсен кӗрешӳри союзӗ, вӑл, ӗҫсыннисемпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрса, халӑх массисен ҫулпуҫӗн тата организаторӗн ӗҫне ӑнӑҫлӑ туса пырать. Массӑсенчен уйрӑм пурӑнма хӑтланнине хирӗҫ пирӗн парти яланах татӑклӑн кӗрешнӗ. Парти халӑхӑн чи анлӑ массисемпе ҫыхӑнмалла, вӗсемпе ҫывӑх пулмалла, хӑшпӗр таран пӗрлешсех каймалла, ҫакӑнсӑр вӑл ӗҫсыннисен организаторӗ тата воспитателӗ пулма пултараймасть, тесе вӗрентет ленинизм. Парти халӑхшӑн ӗҫлесе пурӑнать, унӑн интересӗсемшӗн кӗрешет, ӑна коммунизм ҫулӗпе ертсе пырать.

Пирӗн парти хӑйӗн никӗсне хывнӑ кунсенчен пуҫласах ӗҫсыннисен интересӗсене яланах хӳтӗлет. Вӑл наукӑлла коммунизм теорине пурнӑҫа кӗртсе, теорипе практикӑна, сӑмахпа ӗҫе пӗр-пӗринчен уйӑрмасӑр марксизм-ленинизм вӗрентӗвӗн тасалӑхне сыхласа усрать, ӑна кӗрешӳре аталантарса тата пуянлатса пырать.

Коммунистсен партийӗн пӗтӗм ӗҫӗнче халӑха, ӗҫсыннисен революцилле вӑй-хӑватне ҫирӗп шанса тӑни витӗр палӑрать. Парти пурнӑҫри мӗнпур ырлӑхсене тӑвакан рабочисемпе хресченсем чӑн-чӑн истори тӑвакансем пулса тӑнине шута илет.

Парти халӑха мӗн кирлине тӗрӗс палӑртать. Ҫавӑнпа ӑна халӑх шанать, ӑна пулӑшса пырать. Парти вӑйӗ—вӑл халӑхпа тачӑ ҫыхӑну тытниче. Халӑх вӑйӗ—вӑл хӑйӗн Коммунистсен партийӗ тавра ҫирӗп пӗтӗҫсе тӑнинче.

Парти нумай миллионлӑ массӑсемпе яланах ҫирӗп ҫыхӑну тытать, вӗсене политикӑлла воспитани парас тесе ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлет. Пирӗн парти хӑйӗн политикине яланах халӑх массисен пысӑк вӑй-хӑвачӗпе пурнӑҫа кӗртсе пынӑ. Ҫакӑ ӑна рабочи класпа хресченсен кӗрешӳри союзне организацилеме, капиталистсемпе помещиксене сирпӗтсе антарма, пролетариат диктатурине организацилеме, Совет Союзӗнче социализмла общество туса ҫитерме май пачӗ.

Халӗ парти социализмран майӗпен коммунизма куҫса пырассине, коммунизмла общество туса хурассине хӑйӗн тӗп задачи тесе шутлать. Ҫак условисенче парти халӑх массисемпе тытакан ҫыхӑнусене малалла вӑйлатни, халӑха творчествӑлла ӗҫе активлӑ хутшӑнтарни тата пысӑкрах вырӑн йышӑнать.

Парти пурнӑҫӗн тӗп законӗ—КПСС Уставӗ парти членӗсене массӑсемпе ҫыхӑнса тӑрассине куллен ҫирӗплетсе пыма, ӗҫсыннисене мӗн кирлине вӑхӑтра туса пыма, партире тӑманнисене парти политикипе решенийӗсен тӗп шухӑшне ӑнлантарса пама хушать.

Пирӗн партин ӗҫӗ, унӑн политики, социализм стройӗн лайӑх енӗсемпе пӗтӗмпех усӑ курнипе, производительнӑй вӑйсене пӗрмаях аталантарма, коммунизмӑн пурлӑхпа производство никӗсне туса хума май парать. Парти хӑйӗн пӗтӗм тимлӗхне хуҫалӑхпа культура строительствине, Совет государствин вӑй-хӑватне тӗреклетес ӗҫе парать.

Пирӗн халӑхшӑн коммунизм—инҫетри тӗллев мар. Коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешесси вӑл йывӑр промышленноҫа—пӗтӗм экономикӑн тӗп никӗсне—хӑвӑрт малалла аталантарасси, ялхуҫалӑхне хӑватлӑн ҫӗклентересси, материальнӑй ырлӑхсем ытларах туса хатӗрлесси, халӑх пурнӑҫне лайӑхлатасси пулать. Ҫавӑнпа пирӗн ҫӗршывра хӑватлӑ гидроэлектростанцисем тӑваҫҫӗ, атом энергийӗпе мирлӗ пурнӑҫра усӑ курас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ, техникӑна малалла аталантарассишӗн, техникӑна лайӑхлатса, унпа аванрах усӑ курассишӗн, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ вӑл, юлашкинчен, коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн чи кирли, чи пахи пулса тӑрать.

Социализмла экономикӑна, ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑвӑрт ӳстерес ӗҫре массӑсен творчествӑлла пуҫарӑвӗ хӑватлӑ вӑй пулса тӑрать.

Коммунистсен партийӗ, массӑсемпе тытакан хӑйӗн ҫыхӑнӑвӗсене сарса, ҫирӗплетсе пырса, ӗҫсыннисен хуҫалӑхпа культура строительствинчи активлӑхне малалла ӳстерет. Ҫакна туна хуҫалӑхпа культура строительствине парти ертсе пымалли меслетсене лайӑхлатмалла, формализмпа ответсӑрлӑха, хут тӑрӑх, ӗҫе пӗлмесӗр, «пӗтӗмӗшле» ертсе пымалли меслетсене нимӗн шеллемесӗр пӗтермелле.

Халӑхпа ҫыхӑну тытни, халӑх хушшинче ӗҫлени партипе совет работникӗн, пирӗн кадрсен чи паха енӗ пулса тӑрать. Парти ҫапла вӗрентет: массӑсем хушшинче ӗҫлесси резолюцисем ҫырнипе, пурнӑҫпа ҫыхӑнман «кӑтартусем» панипе пулакан ӗҫ мар. Политикӑлла тата организаторла ӗҫре паллӑ тӗллев, конкретлӑх пулмалла, кашни предприятие, кашни колхоза ҫитмелле, кашни ҫынпа тӗл пулса, ӑна мӗн кирлине, вӑл мӗнле ӗҫленине пӗлмелле, пурне те лайӑх ӗҫлекен тумалла. Практикӑра час-часах ҫакна курма пулать: политикӑлла ӗҫсене коллективӑн малта пыракан пайӗ хушшинче кӑна туса пыраҫҫӗ, кая юлнӑ, ӗҫре тӑрӑшман работниксене парти организацийӗсем курмаҫҫӗ.

Совет ҫыннисем пирӗн ҫӗршывра ҫултан-ҫул ытларах электроэнерги, металл, машинӑсем, станоксем, халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларнишӗн, парти ялхуҫалӑхне ҫӗклес тӗлӗшпе йышӑннӑ решенисем пурнӑҫа кӗрсе пынӑшӑн тивӗҫлипе савӑнаҫҫӗ. Анчах тунӑ ҫитӗнӳсем пире нихӑш енчен те лӑплантарма пултараймаҫҫӗ. Пирӗн халӑх хуҫалӑхӗнче, уйрӑмах ялхуҫалӑхӗнче, ҫитменлӗхсем, татса паман задачӑсем нумай-ха. Ҫӗршыва ялхуҫалӑх продукчӗсем, промышленноҫа чӗртавар ытларах кирлӗ. Пурте лайӑх ӗҫленӗ пулсан, кая юлса пыракан колхозсем, МТС-сем, совхозсем, районсем, облаҫсемпе республикӑсем пулман пулсан, продуктсемпе чӗртавар нумай ытларах туса илме пулатчӗ. Час-часах ҫакӑн пек фактсем курма пулать: юнашар, пӗр пек условисенчех пурӑнакан хуҫалӑхсем хуҫалӑх ҫулне тӗрлӗ результатсемпе вӗҫлеҫҫӗ: пӗрисем—ҫитӗнӳсем тӑваҫҫӗ, теприсем—кая юлаҫҫӗ.

Юлса пыракан колхозсемпе совхозсем пурри мӗнрен килет-ха? Хӑйсен малашлӑх планӗсене пурнӑҫласа пыма вӗсене мӗн кансӗрлет? Час-часах объективлӑ сӑлтавсем ҫинчен калаҫнине илтме пулать. Чӑннипе илсен, малта пыракан тата кая юлакан колхозсен, совхозсен, районсен хуҫалӑх ӗҫӗсем пӗр пек пулманни пуринчен ытла ялхуҫалӑхне парти, совет тата ялхуҫалӑх органӗсем мӗнле ертсе пынинчен килет. Вӑл ҫак хуҫалӑхсенче партилле-политикӑлла ӗҫе мӗнле йӗркеленинчен килет. Партипе совет работникӗсем, чӑн-чӑн ертсе пыракансем тата организаторсем пулса, колхозсенче, МТС-сенче, фермӑсенче, бригадӑсенче ӗҫлесен, вара ҫитӗнӳ пулатех.

Ертсе пыракан работниксем пурнӑҫран юлаҫҫӗ, производство техникипе экономикине тӗпчесе пӗлмеҫҫӗ пулсан, вырӑнта организаторла ӗҫсем тӑвас вырӑнне кабинетсенче ларса ирттереҫҫӗ пулсан, ҫавӑн пек работниксене парти организацийӗсенче сивӗччӗн критиклеҫҫӗ, ӗҫе лайӑхлатма хушаҫҫӗ.

Руководительсем пурнӑҫран, массӑсенчен уйрӑлса кайсан, предприятисен, колхозсен, учрежденисен ӗҫӗнчи нумай ҫитменлӗхсем вӑрахчен палӑрмасӑр юлаҫҫӗ, нумай вӑхӑта пыракан чире куҫаҫҫӗ. Вара малта пыракан хуҫалӑхсен лайӑх опычӗ, новаторсен ӗҫри тӗслӗхӗсем анлӑн сарӑлаймаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл государство интересӗсене, халӑх интересӗсене пысӑк сиен кӳрет.

Коммунистсен партийӗ тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларнине, каппайланса кайнине тӳсме пултараймасть; вӑл хӑйӗн кадрӗсем пурнӑҫран юлнипе, ӗҫсынни массисенчен уйрӑлса кайнипе килӗшмест. Ҫакна пуҫламӑш парторганизацисенчи отчетпа суйлав пухӑвӗсем, партин районсемпе хуласенчи конференцийӗсен итогӗсем те лайӑх кӑтартса параҫҫӗ. Коммунистсен пысӑк активлӑхӗ, критика ӗҫлӗ те сивӗч пулни—ҫаксем пурте парти ӗҫне ҫӳлӗрех шая ҫӗклеме, парторганизацисемпе массӑсем хушшинчи ҫыхӑнусене ҫирӗплетме кирлӗ.

* * *

Пирӗн общество малалла кайса пынӑ май ӑнланулла ӗҫлесе истори тӑвакан ҫынсен йышӗ, вӗсен активлӑхӗ ӳснӗҫемӗн ӳсет. Коммунизм стихийӑллӑ мар, миллионшар ҫынсен ӑнланулла творчествине пула пуҫланса, аталанса пырать.

Ӗҫсыннисен ӑнланулӑхӗ, вӗсен ӗҫри хастарлӑхӗ мӗн чухлӗ пысӑкрах, социализм стройӗн лайӑх енӗсем ҫавӑн чухлӗ ытларах палӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та массӑсене социализмла воспитани парасси пирӗн партин чи паллӑ задачи пулнӑ, халӗ те чи паллӑ задачи пулса тӑрать. Парти организацийӗсен пӗтӗм идеологилле ӗҫне ҫав задачӑна пӑхӑнтарнӑ. Идеологилле ӗҫӗн чи кирлӗ пайӗ вӑл массӑсене ӗҫ ҫине, обществӑлла харпӑрлӑх ҫине коммунистла пӑхма воспитани пани пулса тӑрать. Парти коммунистсене Ленинӑн паллӑ сӑмахӗсене асра тытма хушать: радовой рабочисем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн, пӗтӗм общество пурлӑхӗ пулса тӑракан ҫӗр кӑмрӑкӗн, тырпулӑн тата ытти продуктсен кашни пӑтне сыхлассишӗн чун-чӗререн тӑрӑшнӑ ҫӗрте коммунизм пуҫланать.

Идеологилле ӗҫри паллӑ задача вӑл—ӗҫсыннисене совет патриотизмӗн, халӑхсен

Колхозсенчи отчетпа суйлав пухӑвӗсем!

Хуҫалӑхӑн кашни отраслӗне хӑвӑрт аталантарни кирлӗ

Хӑйӗн отчетлӑ докладӗнче Крупская ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ А. Ефимов юлташ артель иртнӗ ялхуҫалӑх ҫулӗнче тунӑ ӳсӗмсем ҫинчен ытларах калама тӑрӑшрӗ.

— КПСС Центральнӑй Комитечӗн январьти Пленумӗн решенийӗсене пурнӑҫласа пырса,—терӗ вӑл,—пирӗн колхозниксем 1955 ҫулта тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн тата выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем ытларах туса илессишӗн ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ.

Унтан председатель колхозри строительство ӗҫӗсем ҫинчен тата хуҫалӑхӑн кашни отраслӗнче мӗн чухлӗ ӗҫкунӗ расходлани ҫинчен каларӗ. Председатель сӑмахӗ вӑрӑм пулчӗ, ҫапах вӑл унта нумай ӗҫсем ҫинчен нимӗн асӑнмасӑрах иртрӗ.

Председателе ӗненсен, колхозра ӗҫсем йӗркеллех пулса пыраҫҫӗ. Тӗрӗссипе вара колхозра халлӗхе ун пек мухтанма сӑлтавсем ҫукрах. Ҫавна пулах ӗнтӗ, артель членӗсем председателе нумай ыйтусем пачӗҫ.

— Артель иртнӗ ҫул, пӗтӗмӗшпе илсен, малашлӑх плана мӗнле пурнӑҫланӑ?

— Пахча ҫимӗҫрен, хурт-хӑмӑртан, садран илекен тупӑш мӗншӗн ӳсмест?

— Сысна вити хӑҫан лартӑпӑр?

— Выльӑх-чӗрлӗхрен тупӑш ытларах илме мӗн чӑрмантарать?

Тата ытти ыйтусем те пулчӗҫ пухура.

Крупская ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗ—районти чи пысӑк колхоз. Вӑл халиччен уйрӑм артельсем пулнӑ ултӑ яла пӗрлештерсе тӑрать. Шупашкар хулин кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ енче 25 тӑваткал километр йышӑнать унӑн ҫӗр лаптӑкӗ. Артелӗн тухӑҫлӑ тырпул ӳстерме тата йышлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетме питех те пысӑк майсем пур. Уй-хирсенче лайӑх тӑпраллӑ ҫӗр, выльӑхсене ҫуллахи вӑхӑтра ҫӳретме улӑх-ҫарансем те чылай. Шупашкар хули, чугун ҫулпа шоссе ҫулӗ ҫывӑххи те колхоза малалла кайма чылай пулӑшмалла.

Анчах мӗнле усӑ кураҫҫӗ-ха ҫак пысӑк майсемпе Крупская ячӗпе тӑракан колхозра? Ҫулталӑкри отчета малашлӑх планпа, ҫавӑн пекех иртнӗ ҫулсенчи итогсемпе танлаштарса пӑхсан, артель тунӑ ӳсӗмсем курӑнсах каймаҫҫӗ. Акӑ, иртнӗ хуҫалӑх ҫулӗнче ӗнесенчен сӗт суса илесси, малтанхи ҫулхипе танлаштарсан, 296 литр таран чакнӑ, аш-какай та нумай сахалрах илнӗ. Усӑ куракан ҫӗрсен кашни 100 гектарӗ пуҫне сӗт 31 центнер, аш-какай 9,6 центнер ҫеҫ илнӗ. Артелӗн укҫа-тенкӗ тупӑшӗ те 1954 ҫулхинчен пӗчӗкрех, кашни гектар ҫӗр пуҫне 223 тенкӗ ҫеҫ.

Малашлӑх план тӑрӑх 1955 ҫулта кашни гектартан 12-шер центнер тӗштырӑ туса илме палӑртнӑ пулнӑ. Ҫӑннипе вара икӗ центнер сахалрах илнӗ. Уйрӑм культурӑсен тухӑҫлӑхӗ тата пӗчӗкрех. Сӑмахран, кашни гектартан сӗлӗ 5,8-шер центнер, хура тулӑ 4,1 центнер ҫеҫ пухса кӗртнӗ. 70 гектар ҫине акнӑ кукуруза йӑлтах пӗтсе ларнӑ. Техникӑлла культурӑсенчен те колхоз тупӑш сахал илнӗ. Иртнӗ ҫул 16,4 гектар ҫине кантӑр акнӑ. Вӑл питӗ начар пулнӑ. Кантӑр ҫурӑмӗсене сырмарах сӗртсе пӗтернӗ. Ҫапла вара, артель кантӑртан пурӗ те 2.764 тенкӗ, е кашни гектартан 159 тенкӗ ҫеҫ тупӑш илнӗ.

Артель тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерейменни, чи малтанах, уй-хире вырӑнти тата минераллӑ удобренисем сахал кӑларнинчен килет. Иртнӗ ҫул хире пурӗ те 990 тонна, урӑхла каласан, сухалакан кашни гектар ҫӗр пуҫне 2-шер тонна ҫеҫ тислӗк кӑларнӑ. Ҫӗре минераллӑ удобренисемпе ҫемҫетес ӗҫе те питӗ начар туса пынӑ.

Вырӑнти тата минераллӑ удобренисем кӑларас ӗҫе кӑҫал колхозра халӗ те тытӑнманни пӗрех. Фермӑсем ҫывӑхӗнче пиншер лав тислӗк, уй-хирте вара пӗр тислӗк купи те курӑнмасть.

— Эпир кукуруза акса тӑвас ӗҫе хакламан,—терӗ пухура М. Платонова колхозница.—Иртнӗ ҫул ҫанталӑк условисене шута илмен, кукуруза вӑрлӑхне 7—10 сантиметр тарӑнӑшне хурса хӑварнӑ. Ҫавӑнпа вӑл шӑтса та тухаймарӗ.

Кукуруза туса илейменнине пула, колхоз иртнӗ ҫулта обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх валли апат ҫителӗклӗ хатӗрлеймен. Артель правленийӗ выльӑхсене ҫитерме концентратлӑ апатсем те кирлӗ чухлӗ уйӑрса паман.

Выльӑх апачӗн ҫирӗп никӗсне туса хуман ҫӗрте сӗт, аш, ҫӑм, ҫӑмарта туса илесси ӳссе пырасса кӗтме ҫук. Колхозра выльӑх-чӗрлӗх йышӗ те пӗлтӗрхинчен чакнӑ. 1955 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне колхозра 66 ӗне усранӑ, халӗ 62 ӗне кӑна. 50 сысна аминчен 225 ҫура ҫеҫ илсе ӳстернӗ, 33 сысна ҫеҫ самӑртнӑ. Ҫулталӑк хушшинче кашни ама пуҫне 1,1 центнер сысна ашӗ илнӗ. Начар тӑрантарса усранӑ пиркиех ӗнтӗ ӗнесемпе пӑрусем 10 пуҫ, 23 сысна, 34 сурӑх вилнӗ.

Колхоз правленийӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе артелӗн пысӑк тупӑшлӑ отраслӗ туса хума тӑрӑшмасть. Пачах урӑхла, выльӑх-чӗрлӗх фермисенчен илекен тупӑш чакса пырать. 1954 ҫулта ҫак отрасльрен 119 пин тенкӗ тупӑш илнӗ пулсан, пӗлтӗр икӗ хута яхӑн сахалрах е 60.981 тенкӗ ҫеҫ илнӗ. 147 пуҫ сысна усрани колхоза мӗн пурӗ те 13.580 тенкӗ, 250 чӑх усрани—1.955 тенкӗ тупӑш панӑ. Ҫапла вара, выльӑх-чӗрлӗх фермисен тупӑш хӑйсене тытса усрама та ҫитмест.

Колхозниксем правление выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе ҫителӗксӗр ертсе пынӑшӑн хытӑ критиклерӗҫ.

— Ӗнесенчен сӗт суса илесси пирӗн фермӑра чакса пырать,—терӗ сӗт-ҫу фермин заведующийӗ С. Дмитриев юлташ. — Ӗнесене шӑн улӑм ҫитерсе усратпӑр. Правлени фермӑри ӗҫсемпе пачах интересленмест. Дояркӑсем ҫапла калаҫҫӗ: машина ҫулӗ чӑраннӑранпа пирӗн пата никам та килмест. Малашне правлени выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе тивӗҫлипе ертсе пымалла.

Иртнӗ ҫулта кашни чӑхран 37 ҫӑмарта ҫеҫ илнӗ.

— Пирӗн колхоз руководителӗсем, — терӗ Шашков колхозник,—чӑхсем валли тӗштырӑ уйӑрса парасшӑн мар, ҫӑмарта хакла ларать, теҫҫӗ. Апат ҫитермесӗр чӑхсенчен ҫӑмарта ӑҫтан нумай илӗн-ха? Чӑхсен вити те питӗ тӑвӑр, 24 тӑваткал метрлӑ вырӑнта 450 чӑх усратпӑр.

Артель членӗсем ҫапла каларӗҫ: колхоз руководителӗсен пуҫарулӑх ытларах кирлӗ, унсӑрӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ те малалла каймӗ. Пухура хуҫалӑха малалла аталантармалли пысӑк майсемпе усӑ курма резервсене кӑтартса пачӗҫ.

Шупашкар районӗнчи хӑшпӗр колхозсем, хула ҫывӑхӗнче пулнӑ май, пахча ҫимӗҫ тата улма-ҫырла сутса пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Крупская ячӗпе тӑракан артельпе юнашарти Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз, сӑмахран, иртнӗ ҫулта улма-ҫырла тата купӑста-хӑяр сутса 400 пин тенке яхӑн тупӑш илнӗ. Колхозра 3 пысӑк теплица пур, унта хӗлӗн-ҫӑвӗн пахча ҫимӗҫ ҫитӗнет. «Красный флот» колхоза та пахча ҫимӗҫ туса илни ҫӗршер пин тупӑш парать. Асӑннӑ артельсенче пахча ҫимӗҫ лартса тӑвас ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ, ӑна ӑста специалистсем ертсе пыраҫҫӗ. Крупская ячӗпе тӑракан колхозӑн та, кӳршӗсемпе пӗр условисенче вырнаҫнӑ май, пахча ҫимӗҫ тата улма-ҫырла ӳстерсе, ҫӗршер пин тенкӗ тупӑш илме май килет.

Анчах кунта ҫак ӗҫе хакламаҫҫӗ-ха. Иртнӗ ҫул 12,5 гектар ҫине лартса тунӑ пахча ҫимӗҫрен пурӗ те 224 тенкӗ ҫеҫ тупӑш илнӗ, ҫак ӗҫре вара 5.280 ӗҫкунӗ расходланӑ. Колхозра пахча ҫимӗҫ енӗпе ятарласа ӗҫлекен агроном та (А. Мельников юлташ), садоводсемпе пахча ҫимӗҫ бригадирӗсем те пур.

Пахча ҫимӗҫ туса илессине ӳстерессишӗн—Крупская ячӗпе тӑракан колхозра питех те кирлӗ ӗҫ. Улма-ҫырла сачӗсене пысӑклатсан, хӑяр, купӑста, сухан, помидор ытларах лартса, тухӑҫларах туса илсен, колхозӑн укҫа-тенкӗ тупӑшӗ нумай ӳсме пултарать. Вара артель членӗсем те ӗҫкунӗ пуҫне кӑҫалхи пек 20-шер пус кӑна мар, ытларах укҫа илӗҫ.

Крупская ячӗпе тӑракан колхозра ӗҫ дисциплини питӗ япӑхса кайнӑ. Иртнӗ ҫулта 216 колхозник ӗҫкунӗсен минимумне тултарман, вӗсенчен 139 ҫын пӗр ӗҫкунӗ те туман. Колхозра ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫлекенсен йышӗ, 1954 ҫулхипе танлаштарсан, татах нумайланнӑ. Ҫакӗ вӑл ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӑхӑтра туса ирттерме чӑрмантарать, тӳрӗ кӑмӑллӑ колхозниксене чӗререн тарӑхтарать.

Колхоз правленийӗ дисциплинӑна ҫирӗплетес енӗпе сахал ӗҫленӗ. Кунта, чи малтанах, организаторла ӗҫсем ҫитменни палӑрать. Иртнӗ ҫулталӑк хушшинче колхозниксен пӗрлехи пухӑвне пурӗ те икӗ хут ҫеҫ ирттернӗ. Колхоз ӗҫӗнчен пӑрӑнса ҫӳрекенсем ҫинчен правлени ларӑвӗсенче те сайра хутра ҫеҫ сӳтсе явнӑ. Колхоз председателӗ правлени членӗсемпе коммунистсем ҫине, актив ҫине таянса ӗҫлемен, ҫавӑн пирки йышӑннӑ решенисем те чылайӑшӗ пурнӑҫа кӗреймен. Администрацине управлени штатне тытса тӑма производствӑлла планпа пӑхнинчен икӗ хута яхӑн ытларах ӗҫкунӗ пӗтернӗ.

Колхоза машина-трактор станци ҫителӗксӗр пулӑшать. Кунта ӗҫлекен 8-мӗш трактор бригади договора 22 тӗрлӗ ӗҫ тӑрӑх пурнӑҫламан. Механизаторсем уйрӑммӑнах кукурузӑпа ҫӗрулми акса тӑвас, комбайнпа тырӑ вырса пухас, ирхи тата кӗрхи ҫӗртме сухалас плана ҫителӗксӗр пурнӑҫланӑ. Пухура колхозниксем МТС отчетне тӗплӗн сӳтсе яврӗҫ, трактор бригадин ӗҫне лайӑхлатма хушрӗҫ.

Крупская ячӗпе тӑракан колхоза правленине район руководителӗсем енчен ытларах пулӑшни кирлӗ. Анчах ҫак пулӑшу халлӗхе курӑнмасть-ха. Отчетлӑ пухӑва ирттерме колхоза райсовет исполкомӗн председателӗ А. Семенов юлташ килнӗ. Район руководителӗ колхоза пӗр-икӗ кун маларах килсе ӗҫсемпе тӗплӗн паллашма вӑхӑт тупайман пулас. Ҫавӑнпа та вӑл колхозниксем умне тухса пӗтӗмӗшле сӑмахсем кӑна калама пултарчӗ. Ҫитменлӗхсене палӑртни те, хуҫалӑхра усӑ курмасӑр выртакан резервсене конкретлӑ кӑтартса пани те пулмарӗ унӑн сӑмахӗнче.

Колхоз членӗсем кӑҫал кашни гектартан 12-шер центнер тӗштырӑ, кукурузӑн симӗс массине 250-шар центнер пухса кӗртме, кашни ӗнерен 1.300-шер литр сӗт суса илме, 250 сысна самӑртма сӑмах пачӗҫ. Колхозниксем уй-хире 6.530 тонна тислӗк кӑларма, 1.000 тонна минераллӑ удобренисем кӳрсе килме палӑртаҫҫӗ. Артелӗн укҫа-тенкӗ тупӑшӗ кӑҫал 510 пин тенке ҫитмелле.

Ҫак обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртесси ҫӑмӑл мар. Артель правленийӗ хуҫалӑха малалла аталантарас ӗҫе конкретлӑ ертсе пырсан кӑна колхозниксем кӑҫал пысӑк ҫитӗнӳсем тума пултарӗҫ.

В. ВАСИЛЬЕВ.
А. НИКОЛАЕВ.
(«Коммунизм ялавӗ» хаҫатӑн ятарласа кайнӑ корреспонденчӗсем).

Крупская ячӗпе тӑракан колхоз,
Шупашкар районӗ

ҫирӗп туслӑхӗн, пролетарилле интернационализмӑн шухӑшӗпе воспитани парасси, буржуалла пӑсӑк идеологипе мораль кирек те мӗнле палӑрнине хирӗҫ татӑклӑн кӗрешесси пулса тӑрать.

Паллах, ҫак задачӑна ҫутта кӑларас ӗҫе пурнӑҫпа ҫыхӑнтармасӑр туса пынипе татса пама ҫук. Вӑл парти хуҫалӑхпа политикӑри конкретлӑ задачӑсене татса парас тесе нумай енлӗ хӗрӳллӗ ӗҫ туса пынипе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать.

Марксизм-ленинизм парти туса паракан пӗтӗм воспитани ӗҫӗн идейӑлла никӗсӗ пулса тӑрать. КПСС революцилле теорие практикӑлла ӗҫре аталантарса, пуянлатса пырать. Ҫакӑ вӑл партин решенийӗсенче палӑрать, вӑл решенисем партин коллективлӑ ӑс-хакӑлне палӑртса тӑраҫҫӗ.

Социализмла строй условийӗсенче марксистла-ленинла теори уйрӑмах пысӑк вырӑнта тӑрать. Вӑл коммунизм тӑвакан миллионшар ҫынсене практикӑлла ӗҫре ҫул кӑтартса пырать. Ҫавна май пропагандӑпа агитацин содержанийӗ тӗпренех улшӑнать. Ҫакна Ленин темиҫе хутчен те кӑтартса панӑ. «Ӗлӗкхи пропаганда,—тенӗ Владимир Ильич,—коммунизм ҫинчен каласа парать, тӗслӗхсем илсе кӑтартать. Анчах ҫак кивӗ пропаганда ниме юрӑхсӑр, мӗншӗн тесен социализм мӗнле тумаллине ӗҫре кӑтартса парас пулать. Пӗтӗм пропаганда хуҫалӑх строительствинчи политикӑлла опыт тӑрӑх пулса пымалла. Ҫакӑ вӑл пирӗн задача, кам ӑна ӗлӗкхи пек ӑнланма шутлать, вӑл кая юлать, вӑл хресченсемпе рабочисен масси валли пропаганда ӗҫне туса пыма пултараймасть. Пирӗн тӗп политика халӗ государствӑн экономикӑлла строительстви пулмалла... Ҫавӑнпа та пӗтӗм агитаци, пӗтӗм пропаганда ҫав никӗс ҫинче пулса пымалла. Сӑмах ваклани сахалтарах пулмалла, мӗншӗн тесен ӗҫҫыннисене сӑмах каланипе ҫырлахтарма ҫук», (Соч., 31 т., 346 стр.).

В. И. Ленин малалла ҫапла каланӑ: «Массӑсене чи малтан пӗтӗм хуҫалӑх пурнӑҫӗн строительствипе ҫыхӑнтармалла... Ҫакӑ вӑл кашни агитатор-пропагандист ӗҫӗнче чи кирли, тӗп вырӑнта тӑраканни пулмалла, вӑл ҫакна ӑнланса илсен, унӑн ӗҫе ӑнӑҫлӑ пулать». (Ҫавӑнтах, 348 стр.).

Анчах пирӗн хушӑра идеологилле ӗҫе тӗрӗс мар ӑнланни час-часах пулать. Ертсе пыракан хӑшпӗр работниксемпе пропагандистсем идеологилле ӗҫе теорие пурнӑҫпа ҫыхӑнтармасӑр туса пыма пӑхаҫҫӗ, социализм строительствин пуян опытне вӗренес, ӗҫри лайӑх тӗслӗхсене суйласа илес, тӗрӗслес тата массӑсем хушшине сарас тӗлӗшпе ҫителӗклӗ тӑрӑшса ӗҫлемеҫҫӗ.

Коммунизм строительствин практикӑлла задачисенчен уйрӑлса кайни—идеологилле ӗҫри тӗп ҫитменлӗх. Парти ҫав ҫитменлӗхе татӑклӑнах пӗтерес тесе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнать; вӑл парти вӗренӗвӗн системине лайӑхлатать, кадрсене экономикӑлла пӗлӳсем парас ыйту ҫине тимлӗрех пӑхать, пичет, пропагандӑпа агитаци, культурӑпа ҫутӗҫ умне Совет государствин экономикӑлла вӑйхӑватне ҫирӗплетес, халӑх пурнӑҫне лайӑхлатас задача лартать.

* * *

Пирӗн партипе совет халӑхӗн нумай миллионлӑ массисем хушшинчи ҫыхӑнусем ҫултан-ҫул саралса, ҫирӗпленсе пыраҫҫӗ, парти социализмла обществӑри ҫул кӑтартса, ертсе пыракан вӑй, пирӗн мӗнпур ҫитӗнӳсен организаторӗпе хавхалантараканӗ пулса тӑрасси ӳсет. Парти массӑсен опытне лайӑх тӗпчесе вӗренет, вӗсен творчествӑлла пуҫарӑвне вӑхӑтра пулӑшать, малта пыракансен опытне, халӑх творчестви парса тӑракан ҫӗнӗ шухӑшсене сарас, вӗсемпе производствӑра усӑ курас тесе ҫине тӑрса кӗрешет.

Парти массӑсемпе тытакан ҫыхӑнусене малалла вӑйлатса пыни юлашки ҫулсенче КПСС Центральнӑй Комитечӗпе СССР Министрӗсен Совечӗ промышленноҫӑн тӗрлӗ отраслӗсенчи, ялхуҫалӑхӗнчи работниксен, строительсен канашлӑвӗсене ирттернинче палӑрчӗ, ҫав канашлусенче промышленность предприятийӗсенчи, колхозсемпе совхозсенчи малта пыракан ҫынсем, халӑх хуҫалӑхӗн тӗрлӗ отраслӗсенчи специалистсем пулчӗҫ. Ҫав канашлусенче партипе правительство руководителӗсем ӗҫҫыннисен йышлӑ массисен представителӗсемпе пӗрле хуҫалӑхпа культура строительствин чи кирлӗ ыйтӑвӗсене сӳтсе яврӗҫ, пирӗн ҫӗршыв коммунизм ҫулӗпе малалла каяс ӗҫри практикӑлла задачӑсене палӑртрӗҫ. Миллионшар рабочисемпе специалистсем хӑйсен предприятийӗсен улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх планне туса хатӗрлес ӗҫе ҫав тери активлӑн хутшӑнчӗҫ.

Хӑйӗн речӗсен пӗрлӗхӗпе, халӑх массисемпе уйрӑлми тачӑ ҫыхӑну тытнипе вӑйлӑ пулса, пирӗн парти ҫӗршыва ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне шанчӑклӑн илсе пырать. Партипе халӑхӑн аслӑ пӗрлӗхӗ, совет халӑхӗ халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи ӗҫҫыннисемпе тӑванла союз туни, мӗнпур ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисемпе туслӑ пулни—ҫак хӑватлӑ вӑй пирӗн общество коммунизм патне пырас ҫул ҫинчи мӗнпур йывӑрлӑхсене сирсе парахать.

Ҫак кунсенче совет ҫыннисем—коммунистсем тата партире тӑманнисем те —ССР Союзӗн халӑх хуҫалӑхне 1956—1960 ҫулсенче аталантармалли улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе КПСС XX-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проекчӗпе паллашаҫҫӗ, ӑна вӗренеҫҫӗ, сӳтсе яваҫҫӗ тата хӑйсем енчен сӗнӳсем параҫҫӗ. КПСС Центральнӑй Комитечӗ туса хатӗрленӗ ҫак пысӑк пӗлтерӗшлӗ документа пӗтӗм халӑх сӳтсе явни Коммунистсен партийӗпе халӑх хушшинчи ҫыхӑнӑва тата ытларах ҫирӗплетет. Коммунистсен партийӗ ертсе пыракан совет халӑхӗ тӑрӑнса ӗҫлени улттӑмӗш пилӗкҫуллӑхри пысӑк задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлама май парӗ.



Укерчӗк ҫинче: Шупашкарти Водопьянов ячӗпе тӑракан тир-сӑран комбинатӗнче ӗҫлекен З. И. Исаева юлташ. Вӑл партин XX-мӗш съезчӗ умӗнхи ӑмӑртура кулленхи ӗҫ нормине 135—140 процент тултарса пырать.

Г. Зиньков фотоӳкерчӗкӗ.

Ялти драма кружокӗ

Нумаях пулмасть Муркаш районӗнчи «Красное Сормово» артель членӗсем хӑйсен колхозӗнчи драма кружокӗ 25 ҫул тултарнине паллӑ турӗҫ. Кружока Т. Трофимов учитель (халӗ вӑл пенси илсе пурӑнать) 1930 ҫулхи декабрь уйӑхӗнче организациленӗ пулнӑ. Драма кружокӗн коллективӗ 25 ҫул хушшинче пӗтӗмпе 150 пьеса ытла лартса панӑ. Вӗсен шутне Ф. Павловӑн «Ялта», Н. Осиповӑн «Айдар» тата «Кушар», А. Калганпа В. Алагерӗн «Нарспи», Максимов-Кошкинскин «Телейлӗ ҫуркунне», Н. Гоголӗн «Ревизор», А. Чеховӑн «Уна» тата ыттисем кӗреҫҫӗ.

Ҫак вӑхӑт хушшинче драма кружокӗн ӗҫне пурӗ 127 ҫын хутшӑннӑ. Кружокра активлӑ ӗҫленисенчен Д. Мясниковапа И. Михайлов ҫамрӑксем Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ умӗнхи ҫулсенче Чӑваш Академи театрӗн сцени ҫинче те выляма тивӗҫлӗ пулнӑ, анчах вӗсем фронтран таврӑнаймарӗҫ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче кружок членӗсенчен В. Михайловпа В. Угольников юлташсем халӗ Совет Ҫарӗн офицерӗсем, Р. Абасеева (Нарспи рольне вылякаскер) педагогика институтӗнчен вӗренсе тухнӑ, учительре ӗҫлет.

Хальхи вӑхӑтра кружокра пурӗ 30 ҫын шутланать. Вӗсем хушшинче Г. Львов аслӑ конюх, Н. Калинина свинарка, М. Баранов бригадир, Н. Уткина продавщица, В. Григорьевпа К. Прокопьева учительсем тата ыттисем те пур.

Кружок ҫулсеренех кӳршӗри «Красный Октябрь», «Свобода», Карл Маркс ячӗпе тӑракан, «Аврора» тата ытти колхозсенче пулать, Сӗнтӗрпе Ишлей районӗсенче те спектакльсем лартса парать.

Иртнӗ кӗркуннеренпе кружок членӗсем хамӑр колхозра Г. Пласкинӑн «Хӗри вӗҫне туй килсен», А. Эсхелӗн «Виҫӗ туй», Н. Айзманӑн «Чавса ҫывӑх та ҫыртма ҫук» тата «Патриотсем» пьесисене лартса панӑ.

Декорацисемпе костюмсем хатӗрлес ӗҫре пире Чӑваш Академи театрӗн художникӗ П. Дмитриев юлташ нумай пулӑшать.

Кружок членӗсем хӑйсен ӑсталӑхӗпе пултарулӑхне ӳстерсе пыраҫҫӗ, куракансен кӑмӑлне тивӗҫтерме рольсене лайӑхрах та лайӑхрах выляма тӑрӑшаҫҫӗ.

П. АНДРЕЕВ.
Драма кружокӗн руководителӗ.

„Крокодил хула тӑрӑх пырать"

Иртнӗ ҫулхи ноябрӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа ВЛКСМ Шупашкар хула комитечӗ «Крокодил хула тӑрӑх пырать» ятлӑ сатирӑллӑ хаҫат кӑларса тӑма пуҫларӗ. Хаҫат хулигансене, харампырсене, ӗҫке ернӗ ҫынсене, кахалсене, начар ӗҫлекен предприяти руководителӗсене, хӑйсен ачисене тӗрӗс пӑхса ӳстерессишӗн тӑрӑшман ашшӗ-амӑшӗсене тата ыттисене те питлет.

Ҫак сатирӑлла хаҫата хула ҫыннисем хытӑ интересленсе вулаҫҫӗ. Кашни кунах витрина умӗнче халӑх йышлӑ пулать.

Редакцие ҫырусем, фотоӳкерчӗксем, карикатурӑсем нумай ярса параҫҫӗ. Акӑ, сӑмахран, пӗр ҫырура ҫапла каланӑ:

«Хаклӑ редакци! Автотранспорт кантурӗн шоферӗ Алексей Эливанов тӑватӑ хут авланчӗ ӗнтӗ. Чи пирвай ҫурҫӗр енче пурӑннӑ чухне авланнӑ. Ҫав арӑмӗпе Шупашкара куҫса килнӗ. Кунта унӑн арӑмӗ ача ҫуратнӑ хыҫҫӑн, Эливанов ӑна пӑрахрӗ те столовӑйсен трестӗнче ӗҫлекен Ш. рабочницӑна илчӗ. Ун хыҫҫӑн тата икӗ хут авланчӗ».

Редакци ҫак ҫырура кӑтартнӑ фактсене тӗрӗслерӗ. Пурте чӑн пулнӑ, ҫырӑва хаҫатра пичетлерӗмӗр.

Редакци урӑхла ҫырусем те илет.

«Эпӗ малашне хамӑн ҫемьепе йӗркеллӗ пурӑнма сӑмах паратӑп. Ачасене лайӑх пӑхатӑп, арӑма тек хӗнеместӗп». Ҫак ҫырӑва хаҫата лекнисенчен пӗри ҫырнӑ.

«Крокодил хула тӑрӑх пырать» хаҫат уйӑхра икӗ хут тухса тӑрать. Ӗҫҫыннисем ӑна кӑмӑллаҫҫӗ. Валентин Черепанов ҫамрӑк хаҫат витринин кантӑкне пӗррехинче чышкӑпа ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Ҫав вӑхӑтра Хӗрлӗ площадьре никамах та пулман, хулиган тарма ӗлкӗрнӗ. Анчах пӗр ватӑ ҫын 1-мӗш милици уйрӑмне пырса ҫакӑн ҫинчен пӗлтернӗ. Хулигана ответ тыттарнӑ.

Хаҫат кӑларас ӗҫе хулари комсомолецсемпе ҫамрӑксем активлӑ хутшӑнаҫҫӗ.

М. РУМЯНЦЕВ.
«Крокодил хула тӑрӑх пырать» хаҫат редакторӗ.

Ялсенчи суту-илӗве лайӑхлатмалла

Шупашкарта республикӑри райпотребсоюзсен тата райпо председателӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлӑва тавар тӑратакан организацисен — Суту-илӳ министерствин тавар базисен представителӗсем те хутшӑнчӗҫ. Канашлу потребкооперацин 1955 ҫулхи ӗҫ итогӗсем тата 1956 ҫулта ун умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен Чӑвашпотребсоюз правленийӗн председателӗ М. Харитонов юлташ тунӑ доклада сӳтсе яврӗ.

Докладчик та, ун хыҫҫӑн тухса калаҫнӑ юлташсем те ҫакна палӑртрӗҫ: хальхи вӑхӑтри ялти суту-илӳ тавар илекенсенӗн ӳсӗнӗсемпе колхозсен пӗрмай ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене ҫителӗклӗ тивӗҫтерейместь. Чӑвашпотребсоюзӑн суту-илӳ организацийӗсем 1955 ҫулта республикӑри ӗҫҫыннисемпе колхозсене тӗрлӗрен таварсем планпа пӑхнинчен 12 миллион тенкӗлӗх сахалрах сутнӑ. Тавар ҫаврӑнӑш планне республикӑра 20 райпотребсоюзпа райпо тултарман. Йӗпреҫ, Пӑрачкав, Комсомольски, Хӗрлӗ Чутай тата ытти хӑшпӗр райпотребсоюзсем уйрӑмах начар ӗҫлеҫҫӗ.

Ялти суту-илӳ япӑхланса кайни Чӑвашпотребсоюзпа районсенчи суту-илӳ организацийӗсен руководителӗсене пӑшӑрхантармалла темелле. Анчах, пачах урӑхла, вӗсем суту-илӗве лайӑхлатас тесе нимӗнех те туман. Кӑҫалхи ҫул планне тултарас тӗлӗшпе каллех начар ӗҫлеҫҫӗ. Январӗн 15-мӗшне Чӑвашпотребсоюз системи плана 34 процент кӑна тултарнӑ. Магазинсемпе лавккасенче нормӑран ытлашши таварсен запасӗ темиҫе миллион тенкӗрен иртет пулин те, кӑҫал, иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтрипе танлаштарсан, тавар ҫаврӑнӑшӗ 6 процент чухлӗ чакнӑ.

Суту-илӳ ҫавӑн пек япӑхса кайнин сӑлтавӗ вӑл суту-илӳ организацийӗсен руководителӗсем организаторла ӗҫе ҫителӗксӗр туса пынинчен килет.

Чылай магазинсемпе лавккасенче халӑха куллен кирлӗ таварсем пулманнипе суту-илӗве ертсе пыракан работниксем ҫаврӑнӑҫусӑр ӗҫленипе кӑна ӑнлантарса пама пулать. Ҫӗмӗрле райпотребсоюзӗ плана тултарса пырать, анчах унӑн магазинӗсенче обязательнӑй йӗркепе пулмалли таварсенчен чылайӑшне складсенче пулнӑ ҫӗртех сутман. Ҫакӑн пек тӗслӗхсем нумай райпотребсоюзсенче пулаҫҫӗ.

Вырӑнти кооператив организацийӗсен руководителӗсем суту-илӗве сарас тӗлӗшпе пуҫарулӑх кӑтартмаҫҫӗ. Тавар ҫаврӑнӑшне вырӑнти промышленность кӑларакан таварсен шучӗпе, ялхуҫалӑх продукчӗсене комисси урлӑ сутассине вӑйлатнипе пысӑклатма майсем пур, анчах вӗсем ҫав майсемпе сахал усӑ кураҫҫӗ.

Чӑвашпотребсоюз правленийӗ те, райпотребсоюзсемпе райпо правленийӗсем те комиссилле суту-илӗве лайӑхлатас тӗлӗшпе халӗ те тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнман-ха. Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ, Шупашкарти коопторг урлӑ сутма мӗн чухлӗ ялхуҫалӑх продукчӗсем тӑратмаллине кӑтартса, кашни райпотребсоюз валли план ҫирӗплетнӗ, анчах ҫав план пурнӑҫланса пымасть.

Потребкооперацин хатӗрлев енӗпе ӗҫлекен аппарачӗ чӑтма ҫук япӑх ӗҫлет. Хатӗрлев управленийӗн начальникӗ Наварнов юлташ хатӗрлев ӗҫне тивӗҫлипе ертсе пымасть. Ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлеме тата сутӑн илме пысӑк майсем пур ҫинчех иртнӗ ҫулхи тӑхӑр уйӑх планне 93,5 процент кӑна тултарнӑ.

Канашлу участникӗсем ҫакна палӑртрӗҫ: потребкоопераци системинчи работниксен суту-илӳ ӗҫӗнчи культури начар. 1955 ҫулта государствӑн суту-илӳ инспекцийӗ суту-илӳ правилисене пӑснине, таварсен хакӗсене пӑхӑнса сутманнине темиҫе хутчен те тупса палӑртнӑ. Суту-илӳ организацийӗсен вывескӑсем, прейскурантсем, хаксен ярлыкӗсем, жалоба кӗнекисем ҫук, суту-илӳ тума кирлӗ оборудовани тата инвентарь начар.

Потребкооперации системинче кооператив харпӑрлӑхне сыхлассине халӗ те кирлӗ пек йӗркелемен. 1955 ҫулта пӗр миллион тенкӗне яхӑн растрата тунине тупса палӑртнӑ, ҫав вӑхӑтрах ку суммӑран ҫуррине кӑна шыраса илнӗ. Кооператив харпӑрлӑхне уйрӑмах Пӑрачкав, Вӑрмар, Шӑхасан, Ишлей районӗсенче япӑх сыхлаҫҫӗ. Ҫак районсенчи суту-илӳ организацийӗсен руководителӗсем суту-илӳре ӗҫлеме кадрсене ответлӑха туймасӑр суйласа илеҫҫӗ, контрольпе ревизи ӗҫне кирлӗ пек йӗркелеме тӑрӑшмаҫҫӗ.

Чӑвашпотребсоюз системинче пӗтӗмпе ултӑ пин ҫын ытла ӗҫлет, вӗсем 210 коллектива пӗрлешсе тӑраҫҫӗ. Анчах суту-илӳ организацийӗсен руководителӗсем ҫак пысӑк вӑйпа кирлӗ пек усӑ курмаҫҫӗ. Суту-илӳ работникӗсем хушшинче социализмла ӑмӑртӑва начар организациленӗ, 73 работника кӑна иртнӗ ҫулта хисеп грамотисемпе тата виҫӗ ҫынна ҫеҫ «Отличник советской торговли» значоксемпе наградӑланӑ.

Ялти суту-илӗве лайӑхлатмалли майсенчен пӗри вӑл магазинсемпе лавккасене таварсем кӳрсе парассине организацилени пулать. Канаш районӗнчи Сиккасси ялповӗ республикӑра пуринчен те малтан таварсене магазинсене кӳрсе парассине организациленӗ, ҫавна пула тавар илекенсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессине чылай лайӑхлатнӑ, суту-илӳре пулакан тӑкаксене чакарнӑ. Иртнӗ ҫулхи тӑхӑр уйӑхра кӑна вӑл 19 пин тенкӗ перекетленӗ. Ҫак ялпо ӗҫӗ ыттисемшӗн пример пулса тӑмалла. Апла пулин те Чӑвашпотребсоюз правленийӗ унӑн опытне сарма тӑрӑшмасть. Таварсене лавккасене кӳрсе парассине нумай районсенче халӗ те йӗркелемен. Ҫавна пула чылай чухне магазинсем хупӑ тӑраҫҫӗ, продавецсем хӑйсем тавар илме ҫӳресе вӑхӑта чылай ирттереҫҫӗ.

Улттӑмӗш пилӗкҫуллӑхра суту-илӳ работникӗсем умӗнче тата пысӑкрах задачӑсем тӑраҫҫӗ. Пилӗкҫуллӑхра государствӑпа кооперации суту-илӗвӗн ваккӑн сутакан тавар ҫаврӑнӑшне 50 процента яхӑн ӳстермелле, уйрӑмах ялта ваккӑн сутакан тавар ҫаврӑнӑшне ытларах ӳстермелле. Республикӑри потребкооперации работникӗсен хӑйсен умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлама пур условисем те ҫителӗклӗ. Ӗҫе тӗрӗс организацилени тата ертсе пыни ҫеҫ кирлӗ.

Редакцие килнӗ ҫыру

Йывӑҫ сутакан складра йӗрке тумалла

Шупашкар хулинче йывӑҫ сутакан склад ӗҫлеме пуҫланӑранпа темиҫе ҫул иртрӗ ӗнтӗ. Вӑл СССР Суту-илӳ министерствин Горькири строительство материалӗсем сутакан базине пӑхӑнса тӑрать. Ку складра кӗске хушӑрах темиҫе директор улшӑнчӗ, анчах паянхи кунччченех йӗркелӗх ҫук. Кирек мӗнле суту-илӳ организацийӗнче те сутмалли япалана виҫеҫҫӗ, турттараҫҫӗ, тавар илекенсенчен укҫа-тенкӗ тӗрӗс илеҫҫӗ, ку складра вара ҫак правилӑсене пӑхӑнмаҫҫӗ.

Шупашкарти йывӑҫ сутакан складри работниксем лайӑх пурӑнма юратаҫҫӗ. Ҫак складӑн продавецӗ Паторов 38 пин тенкӗ, Ишлейри филиалта ӗҫлекен Майоров продавец—4 пин тенкӗ государство укҫине салатса янӑ, анчах Майоров халӗ те ҫав ӗҫрех ӗҫлет.

Шупашкар хулинчи гортопсбыт япӑх ӗҫленӗ пирки юлашки вӑхӑтра ҫынсем вутӑ илме йывӑҫ сутакан склада ытларах пыма тытӑнчӗҫ, анчах складӑн хальхи директорӗ Ф. Федоров юлташ суту-илӗве кирлӗ пек йӗркелеме тӑрӑшмасть.

Складра йӗркелӗх ҫуккине кура унӑн ҫывӑхӗнче уйрӑм ҫынсенчен тӑракан бригадӑсем хӑйсене «кирлӗ пек «ӗҫлеҫҫӗ». Вӗсем складра ӗҫлемеҫҫӗ, анчах та йывӑҫ илме пынӑ ҫынсенчен питӗ нумай укҫа сӑптараҫҫӗ. Складра икшер метр тӑршшӗ татса хунӑ вутӑсем ҫук, 6,5 метр тӑршшӗ пӗренесем кӑна. Вутӑ илме пынӑ ҫынсен склада пырсан чи малтанах уйрӑм ҫынсенчен тӑракан бригадӑсен бригадирӗсемпе тӗл пулма тивет. Вӗсем вутӑ илме пынӑ ҫынсене вутӑ татса парса тата тиесе пулӑшма хатӗрри ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Ҫакӑншӑн кашни кубометр пуҫне 20-шер тенкӗ укҫа илеҫҫӗ. Вутӑ илме пынӑ ҫынӑн вара йывӑҫ сутакан склада хатӗрлесе панӑ вутӑ тесе кашни кубометршӑн 58 тенкӗ те 10-шар пус тӳлемелле, ҫавӑн пекех вутӑна татса тата тиесе панӑшӑн рабочисене алӑран кашни кубометршӑн 20-шер тенкӗ укҫа парса хӑварма тивет.

Шупашкарти йывӑҫ сутакан складӑн директорӗ ҫак фактсем ҫинчен пӗлмест мар. 1956 ҫулхи январӗн 19-мӗшӗнче ҫырнӑ приказра вӑл, складра ӗҫлекен рабочисен вутӑ илме пынӑ ҫынсене вутӑ тиесе памалла, уншӑн вӗсене склад касси урлӑ укҫа тӳлемелле тесе ҫирӗплетнӗ. Анчах та приказ кӑларнӑ кунах вӑл ӑна хӑех пӑснӑ, рабочисене вутӑ тиесе панӑшӑн укҫана касса урлӑ мар, вутӑ илекен ҫынсенчен хӑйсенчен кашни кубометр пуҫне 5-шер тенкӗ илме ирӗк панӑ.

Федоров складра час-часах пулмасть, Атӑл ларнӑранпа вӑл «Приверх» складӗнче икӗ хутчен кӑна пулнӑ. Директор хӑйӗн предприятийӗсенче ҫавӑн пек сайра хутра кӑна пулни ӗҫре пысӑк сиен кӳрет. Ҫакна пулах ӗнтӗ Атӑл хӗрринчи 300 кубометр типӗ вутӑ кӗркунне шыв айне пулнӑ. Рабочисем кун пирки малтанах пӗлтернӗ, анчах Федоров мерӑсем йышӑнман. Халӗ рабочисем ҫак вутта пӑр айӗнчен касса кӑлараҫҫӗ, ҫавӑншӑн йывӑҫ сутакан склад чылай тӑкак курать. Пӑр айӗнче халӗ те 200 кубометр вутӑ ҫапланах выртать-ха.

Йывӑҫ сутакан складӑн ҫынсене вутӑ турттарса пама виҫӗ автомашина пур, вӗсенчен ӗҫре пӗр машини кӑна, вӑл та ҫынсенчен укҫа ытларах илес тесе кӑна ӗҫлет. Сӑмахран, тӑватӑ километра вутӑ турттарса панӑшӑн тариф тӑрӑх 32 тенкӗ те 40 пус укҫа илмелле, анчах та 66 тенкӗ те 40 пус илеҫҫӗ. Кузнецов шофер йывӑҫ сутакан складӑн машинипе хӑй пӗлнӗ пек усӑ курать. Йывӑҫ сутакан складра ӗҫлеме ытти организацисен шоферӗсем те пыраҫҫӗ, вӗсем вара вутӑ турттарса панӑшӑн 50-шар тенкӗ илеҫҫӗ. Ҫапла майпа вӗсем государство машинисемпе хӑйсен интересӗсемшӗн ӗҫлесе организацисене пысӑк сиен кӳреҫҫӗ. Ҫавӑн пек йӗркесӗрлӗхе хирӗҫ кунта никам та кӗрешмест.

Шупашкарти йывӑҫ сутакан складра ҫитменлӗхсем татах та нумай. Складра ӗҫлекен рабочисене ӗҫ вӑхӑтӗнче тӑхӑнма тумтир—алса-чӑлха, брезентран тунӑ курткӑсем памаҫҫӗ, ҫавӑн пекех пӑчкӑсем, кӗреҫесем тата ытти япаласем те ҫук.

Рабочисем хӑйсене ӗҫре тӑхӑнмалли тумтирсем пама темиҫе хут та ыйтнӑ, анчах склад директорӗ Федоров юлташ кашни хутӗнчех, айӑпа хӑйӗн ҫийӗнчен сирес шутпа, Горькирен пулӑшу паманни ҫинчен, хӑй пӗччен нимӗн те тума пултарайманни ҫинчен пӗлтерет.

Йывӑҫ сутакан складра йӗрке тумалла.

А. ИЛЬИН.

Иран парламенчӗн делегацийӗн пуҫлӑхӗ Совет Союзне килсе кайни ҫинчен

ТЕГЕРАН, январӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Иран парламенчӗн ССР Союзне килсе кайнӑ делегацийӗн пуҫлӑхӗ Саед сенатор ӗнер сенат ларӑвӗнче доклад тунӑ, делегаци Совет Союзне кайса курни ҫинчен каласа панӑ.

Хӑйӗн докладӗнче Саед, Совет Союзӗнче курса ҫӳрени ҫинчен тӗплӗн каласа, делегаци членӗсене пур ҫӗрте те ӑшӑ кӑмӑлпа, хапӑл туса кӗтсе илнине палӑртнӑ.

Иран Багдадра тунӑ пакта кӗнӗ хыҫҫӑн Иранпа Совет Союзӗ хушшинчи хутшӑнусем мӗнле йӗркеленсе пыни ҫинчен сӑмах хускатса, Саед ҫакна шанса тӑни ҫинчен каланӑ: «Правительство, премьер-министр Ала тата ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Ардалан юлашки вӑхӑтра туса тӑнӑ чӑрмавсене пӗтерме кирлӗ мерӑсем йышӑнӗҫ, вӗсем ҫакӑн ҫине тимлӗ пӑхӗҫ: Совет Союзӗпе пӗр-пӗрне ӑнланса, ырӑ кӳршӗлле сыхӑнусем тытса пурӑнни пӗр-пӗринпе туслӑ пулма чи кирлӗ условисенчен пӗри пулса тӑрать».

Хатояма Япони парламенчӗн сессийӗнче тухса калани

ПЕКИН, январӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Токиори радио пӗлтернӗ тӑрӑх, паян Япони парламенчӗн сессийӗнче Япони премьер-министрӗ Хатояма тата ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Сигемицу программӑлла заявленисем тунӑ.

Хатояма ҫапла каланӑ: эпӗ ертсе пыракан правительствӑн тӗп задачи вӑл тулашри ӗҫсенче мирлӗ политика тытса пырасси пулать, ку тӗлӗшпе правительство икӗ хут нумайрах вӑй хурса тӑрӑшма хатӗр, тенӗ. Хатояма каланӑ тӑрӑх, Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе тачӑ сыхӑнса ӗҫлесси Японин тулашри политикин никӗсӗ пулса тӑрать.

Японипе Совет Союзӗ хушшинчи хутшӑнусем ҫинчен сӑмах хускатса, Хатояма ҫапла каланӑ: правительство, пӗтӗм халӑх кӑмӑлне асра тытса, маларах палӑртса хунӑ ҫул-йӗрпе килӗшӳллӗн, калаҫусем ирттерӗ, пысӑк ыйтусене татса пама, мирлӗ договор тума, ҫапла вара дипломатилле сыхӑнусене ҫӗнӗрен йӗркелесе яма тӑрӑшӗ, тенӗ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах Хатояма ҫакна палӑртнӑ: шалти политика енӗпе правительство «коммунизма хирӗҫле позицие асра тытса ӗҫлӗ», «халӑх хушшинче коммунизм идейисем ан сарӑлччӑр» тесе, ҫирӗп мерӑсем йышӑнӗ, тенӗ.

Унтан Хатояма Япони ҫарне ӳстерес ыйту ҫинче чарӑнса тӑнӑ, ҫӗнӗ финанс ҫулӗнче правительство Японин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен контингентне ӳстерме шутлать, тенӗ. Ҫакна май Хатояма конституцин тивӗҫлӗ статьине улӑштарма кирли ҫинчен каланӑ.

Унтан ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Сигемицу тухса каланӑ, тӗнчери лару-тӑру ыйтӑвӗсене ҫутатса панӑ, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тулашри политикине яланхи пекех мухтанӑ. Японипе Китай Халӑх Республики хушшинчи хутшӑнусене йӗркелес ыйтӑва хускатнӑ. Сигемицу каланӑ тӑрӑх, Япони правительстви, Китайпа суту-илӳ тӑвассине вӑйлатас тӗллевпе улӑштарман пулсан та, Китай правительствине законлӑ тесе йышӑнма пултараймасть имӗш.

Китай Халӑх Республики. Хальхи вӑхӑтра Китай Халӑх Республикинчи хресченсен ялта социализмла улшӑнусем тӑвассишӗн пыракан кӗрешӗвӗ вӑйланнӑ. Вӗсем халӗ ялхуҫалӑхӗнчи производствӑлла кооперативсене урӑхлатса социализмла хуҫалӑхсем тӑваҫҫӗ.

Январӗн 11-мӗшӗ тӗлне Пекин хули патӗнчи ялхуҫалӑх кооперативӗсене пурне те урӑхлатса ҫӗнетсе социализмла йӗркеллӗ хуҫалӑхсем туса хунӑ.

Укерчӗк ҫинче: Пекин сывӑхӗнчи хресченсен Китайри ялсенче кооперативсем тӑвас ӗҫ ӑнӑҫлӑ аталаннӑ ятпа пулнӑ праҫник кунӗнче ирттернӗ демонстрацийӗ.

Синьхуа агентстви фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Чехословакири халӑхсем Китай Халӑх Республикине панӑ парне

ПРАГА, январӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Чехословакири халӑхсен, Чехословакири Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ тата Чехословаки правительстви ячӗпе ӗнер премьер-министр В. Широкий, Чехословакири Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн пӗрремӗш секретарӗ А. Новотный тата Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ В. Давид Китай Халӑх Республикин Председателӗн заместительне Чжу Дэне Китай халӑхӗ валли хатӗрленӗ парне панӑ. Парне государствӑн тӗштырӑ хуҫалӑхӗ валли кирлӗ машина оборудованийӗнчен тӑрать. Оборудовани шутӗнче—«ЗЕТОР» маркӑллӑ 35 трактор, 40 сноповязалка, тӗштырӑ пухса кӗртмелли 5 комбайн, 15 молотилка, груз турттармалли 5 автомобиль, вырӑнтан вырӑна куҫарса ҫӳремелли ремонт мастерскойӗ тата ытти ялхуҫалӑх машинисемпе инвентарӗсем.

Парне панӑ ҫӗрте Китай Халӑх Республикин *Оборона тӗлӗшпе ӗҫлекен Государство комитечӗн председателӗн заместителӗ Не Жун-чжэнь маршал*, Пӗтӗм Китайри халӑх представителӗсен пухӑвӗн Яланхи комитечӗн членӗ Лю Лань-тао тата Китай Халӑх Республикин Чехословакири послӗ Цао Ин пулнӑ.

Кӑнтӑр Вьетнамри сепаратнӑй суйлава хирӗҫ

ХАНОЙ ХУЛИНЧИ МИТИНГ

ХАНОЙ, январӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Кӑнтӑр Вьетнамӑн учредительнӑй пухӑвӗ текенскерне суйлама Нго Динь Дьем ушкӑнӗ организацилекен суйлава хирӗҫ протест тума январӗн 29-мӗшӗнче Ханой хулинче пысӑк митинг ирттернӗ. 30 пин ҫынлӑ ҫак митинга Вьетнамри Отечественнӑй фронтӑн Центральнӑй Комитечӗпе Ханойри комитечӗ пуҫарнипе пухнӑ.

Митинг пуҫланиччен нумай малтан хулари театр ҫурчӗ патӗнчи площадьре демонстрантсен колоннисем пухӑнма пуҫланӑ. Вӗсем: «Эпир Кӑнтӑр Вьетнамри сепаратнӑй суйлава хирӗҫ протестлетпӗр!», «Кӑнтӑр Вьетнамри концлагерь режимӗ тӗп пултӑр!», «Женевӑра тунӑ килӗшӳсене пӗтӗмпех пурнӑҫлассишӗн эпир татӑклӑнах кӗрешӗпӗр!» тесе ҫырнӑ плакатсемпе лозунгсем ҫӗклесе пынӑ.

Ораторсем митингра американецсемпе Нго Динь Дьем ушкӑнӗ ҫӗршыв икӗ пая уйрӑлса тӑрас йӗркене ӗмӗрлӗхех сыхласа хӑварас тӗлӗшпе тӑвакан маневрсене хирӗҫ, террор режимне хирӗҫ, Индо-Китай пирки Женевӑра тунӑ килӗшӳсен никӗсӗ ҫинче ҫӗршыва хӑвӑртрах пӗрлештерессишӗн кӗрешекен патриотсене хӗсӗрленипе хирӗҫ татӑклӑ протест тунӑ.

Митингра пулнисем пӗр кӑмӑллӑ пулса йышӑннӑ резолюцире ҫапла каланӑ: американецсем хушнипе Кӑнтӑр Вьетнам влаҫӗсем суйлав ирттерме хатӗрленеҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл Женевӑра тунӑ килӗшӳсене сӗмсӗррӗн пӑсни пулать, унӑн тӗллевӗ ҫӗршыв икӗ пая уйрӑлса тӑрас йӗркене ӗмӗрлӗхех сыхласа хӑварасси, Кӑнтӑр Вьетнамран Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен колонийӗпе ҫар бази туса хурасси, ҫӗршывӑн ҫурҫӗр пайӗпе кӑнтӑр пайӗ хушшинчи хутшӑнусене йывӑрлатасси, ҫӗнӗ вӑрҫӑ пуҫласа яма пулӑшасси пулса тӑрать.

Эпир, тенӗ резолюцире, Вьетнамӑн кӑнтӑр пайӗнчи сепаратнӑй суйлава хирӗҫ татӑклӑн протестлетпӗр, ҫине тӑрсах ҫакӑн пек требовани лартатпӑр: Кӑнтӑр Вьетнам влаҫӗсен Женевӑра тунӑ килӗшӳсене тӗрӗс пурнӑҫласа пымалла, пӗтӗм Вьетнамра ирӗклӗ суйлав ирттерме хатӗрленес шутпа Демократиллӗ Вьетнам Республикин правительствипе пӗрле консультацисем ирттермелли конференцие делегатсем ямалла.

Кипр утравӗ ҫинчи лару-тӑру

ЛОНДОН, январӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Кипр утравӗн губернаторӗ Хардинг фельдмаршал Лондонра пулнӑ, утрав ҫинчи лару-тӑру ҫинчен Англи правительствин членӗсемпе пӗрле сӳтсе явнӑ. Лондонран таврӑнсан вӑл январӗн 26-мӗшӗнче Кипр утравне Грецие пӗрлештерессишӗн пыракан юхӑм руководителӗпе Макариос архиепископпа тӗл пулса калаҫнӑ.

Хардинг Лондонран таврӑннӑ хыҫҫӑн утрав ҫинчи самоопределени прави ыйтакан халӑх кӗрешӗвӗ ҫӗнӗрен вӑйланнӑ. Январӗн 26-мӗшӗпе 27-мӗшӗнче утрав ҫинче вӗренекенсемпе ҫамрӑксен демонстрацийӗсем пулса иртнӗ.

Тепӗр кунне Никозире Англи полицийӗпе ҫарӗсем шкул ачисен демонстрацине тапӑннӑ. Ҫак демонстрацири ҫамрӑксем хӑйсен унччен тытса хунӑ юлташӗсене ирӗке кӑларма ыйтнӑ. Вӗренекенсем полицие ҫарсене хирӗҫ тӑнӑ. Хула урамӗсенче баррикадӑсем нумай тунӑ. Полици куҫҫуль кӑларакан газлӑ гранатӑсем пӑрахнӑ. Вӗренекенсем хушшинче аманнисем пур. Полици 30 ҫынна тытса хупнӑ.

Хардингпа Макариос хушшинчи калаҫусем вӗҫленнӗ хыҫҫӑн коммюнике пичетлесе кӑларнӑ. Унта ҫапла каланӑ: Макариоса губернатор хӑй Лондонра ирттернӗ калаҫусен результачӗсем ҫинчен пӗлтернӗ, «Кипр утравӗн политика тата экономика тӗлӗшӗнчи ыйтӑвӗсем» пирки Англи правительстви мӗнле позици йышӑнни ҫинчен каласа панӑ.

Хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, кунта Кипр утравне конституци парасси ҫинчен сӑмах пырать. Ҫак конституци тӑрӑх Кипр утравӗ Британи империйӗн рамкисенче «самоуправлени принципӗсемпе» усӑ курнӑ пулӗччӗ, колониллӗ йӗрке вара ҫаплипех сыхланса юлнӑ пулӗччӗ.

Рейтер агентстви кӑтартса панӑ тӑрӑх, ӗнерхи калаҫусен результачӗсем «шанчӑк параҫҫӗ тесе шутлама ҫук», мӗншӗн тесен «тӗп ыйтусем тӑрӑх тухса тӑнӑ хирӗҫӳсене» иртнӗ эрне вӗҫӗнче Лондонра пулнӑ калаҫусем вӑхӑтӗнче «сирсе ярайман».

ИНДИРЕ ҪЕНЕ ЭЛЕКТРОСТАНЦИ ТУСА ПЕТЕРНЕ

ДЕЛИ, январӗн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Индин информаци бюровӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Уттар-Прадеш штатӗнче «Патхри» текен ҫӗнӗ электростанцие туса пӗтернӗ. Станцие ӗҫе янӑ ятпа пулнӑ савӑнӑҫлӑ пухура штатӑн главнӑй министрӗ Сампурнананд сӑмах каланӑ. Ҫак электростанци Хардвартан 7 мильре. Унӑн хӑвачӗ 20 пин киловатт. Ӑна тума 40 миллион рупи расходланӑ. Строительство ӗҫӗсене кӗске срок хушшинче (пӗр ҫулталӑк туличченех) туса пӗтернӗ.

Ҫӗнӗ электростанципе пӗрле правительствӑн, Уттар-Прадеш штатӗнчи электростанцийӗсен хӑвачӗ 142 пин киловата ҫитет.

ЛАОС КОРОЛӖН ҪАРӖСЕМ КИЛӖШӖВЕ ПӐСАҪҪӖ

ХАНОЙ, январӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Вьетнамри информаци агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Лаосри вӑрҫӑ ӗҫӗсене чарса лартасси ҫинчен Женевӑра тунӑ килӗшӗве король ҫарӗсем ҫав-ҫавах пӑсаҫҫӗ. Январӗн 16-мӗшӗпе 26-мӗшӗ хушшинче вӗсем Сам-Неа тата Фонг-Сали провинцийӗсен тӗрлӗ районӗсенче Патет-Лаон отрячӗсене 8 хутчен тапӑннӑ.

Нумаях пулмасть Лаос королӗн ҫарӗсем хӑйсен Гуэй-Таури хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем валли самолетсем ҫинчен хӗҫпӑшал тата ҫӗнӗ ҫар чаҫӗсем антарса хӑварнӑ. (Гуэй-Тау—Сам-Неа провинцийӗнче, Патет-Лао отрячӗсем вырнаҫнӑ зонӑра). Ҫак операцисене хӳтӗлеме король ҫарӗсем Патет-Лао отрячӗсен позицийӗсене виҫӗ кун хушши минометсемпе персе тӑнӑ.

Профсоюзсенчи вӑйлӑ йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвӗ

Ҫак кунсенче Шупашкарта йӗлтӗрҫӗсен Чӑвашоблпрофсовет енӗне мала тухмалли ӑмӑртӑвӗ пулчӗ. Ӑмӑртӑва 24 команда хутшӑнчӗ.

15 километр чупас енӗпе М. Михайлов (республикӑри учительсен ҫурчӗ) пӗрремӗш, А. Ермолаев (Канашри «Буревестник» спорт обществинчен) иккӗмӗш вырӑн йышӑнчӗҫ.

Канаш хулин представителӗ В. Байдеряков, 10 километра 40 минут та 05 секундра чупса тухса, пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗ, хӗрарӑмсем хушшинче 5 километр чупас енӗпе Вӑрмар МТС-ӗнче ӗҫлекен В. Васильева, 3 километр чупас енӗпе—Д. Пыркова («Энергия» спорт обществинчен) мала тухрӗҫ.

Командӑсем енӗпе илсен Вӑрмар машина-трактор станцийӗнче ӗҫлекенсен команди мала тухрӗ, «30 лет ЧАССР» клуб ҫумӗнчи спорт коллективӗн команди иккӗмӗш, Канашри «Буревестник» спорт обществин команди виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнчӗҫ.

Мала тухнӑ командӑсене грамотӑсемпе вымпелсем тата уйрӑм спортсменсене жетонсем панӑ.

Вӑрмар МТС-ӗнчи йӗлтӗрҫӗсен команди профсоюзсен Пӗтӗм Союзри виҫҫӗмӗш спартакиадине хутшӑнма тивӗҫлӗ пулчӗ. Ку спартакиада Мускавра февралӗн 25-мӗшӗнче пулать.

Шахмат енӗпе РСФСР-та мала тухмалли зонӑри ӑмӑрту

Тӑваттӑмӗш турта чи малтан Новопашинпа Чугунов выляса пӗтерчӗҫ. 23 хут ҫӳренӗ хыҫҫӑн Чугунов хӑй парӑнни ҫинчен пӗлтерчӗ. Архангельск представителӗсем Алексеевпа Стрекаловский пӗр-пӗринчен фигурӑсене хӑвӑрт улӑштарса илчӗҫ, юлашкинчен вӗсен пешкӑсем ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ. Анчах та Стрекаловскин аякра тӑракан пӗр пешкийӗ уҫҫӑнах ҫӗнтерме май панине кура Алексеевӑн парӑнмалла пулчӗ.

Мастер кандидачӗсем Волошинпа Хавский вылянӑ партин пуҫламӑшӗ интереслӗ пулчӗ. Вӗсем каярахпа, хӑйсен фигурисене выляса ярсан, 17 хут ҫӳренӗ хыҫҫӑн партире нихӑшӗ те ҫӗнтереймени ҫинчен пӗлтерчӗҫ.

Ҫак турнирта малта пыракан Алешин тӑваттӑмӗш турта Игумнова ҫӗнтерчӗ. Вӑйӑ вӗҫленес умӗн кунта Игумновӑн вӑййа нихӑшӗ ҫӗнтерейменнипе вӗҫлемелле тума май пурччӗ. Анчах та вӑл, тӗрӗс мар ҫӳресе выляса ячӗ.

Кубаревпа Дамский партийӗ те интереслӗ пулчӗ. Хусан шахматисчӗ Дамский вылямалли вӑхӑт ҫитменнине пула 37 хут ҫӳренӗ хыҫҫӑн парӑнчӗ.

Турнир мӗнле пынине курма ҫӳрекенсем тӑваттӑмӗш турти партисенчен пуринчен ытла мастер кандидачӗ Радченкӑпа (Краснодар) Чӑваш АССР чемпионӗ Никитин вылянипе ытларах интересленчӗҫ. Никитин хӑйӗнпе вылякан шахматистӑн пысӑк опыт пуррине шута илсе, питех те тӑрӑшса вылярӗ. Выляса пӗтерме вӑхӑт ҫитес умӗн Радченкӑн парӑнмалли ҫеҫ юлни сисӗнме пуҫларӗ. 40 хут ҫӳрес умӗн Никитинӑн 3 ытлашши пешка пулчӗ. Радченко выляса яни ҫинчен пӗлтерчӗ.

Мастер кандидачӗсем Сергиевскипе Петров вылянӑ партире Сергиевский ҫӗнтерчӗ. Козловпа Гизатуллин партине тепӗр чухне выляса пӗтерме хӑварнӑ.

Мастер кандидачӗ Хавский виҫҫӗмӗш туртан юлнӑ партие, тепӗр хут выляма тытӑнмасӑрах, Игумнова выляса яни ҫинчен пӗлтерчӗ.

Тӑватӑ тур хыҫҫӑн Горький облаҫӗн шахматисчӗ Алешин малта пырать. Вӑл 3,5 очко выляса илнӗ. Никитинпа Сергиевский (иккӗшӗ те Чӑваш АССР-ӗнчен) тата Новопашин тӑватӑ вӑйӑра 2,5-шер очко, Кубарев (Горький хули)—виҫӗ вӑйӑра 2 очко выляса илнӗ.

Вӑрмар районӗнче

ҪУРТ-ЙӖР ЛАРТМА ЙЫВӐҪ ХАТӖРЛЕҪҪӖ

«Маяк» колхозри строительсем иртнӗ ҫулта ҫӗнӗрен лаша, сысна, чӑх-чӗп витисем, хранилищӑсемпе складсем тата ытти ҫурт-йӗрсем туса лартрӗҫ.

Малашлӑх план тӑрӑх кӑҫал та ҫӗнӗ ҫуртсем чылай тумалла. Халӗ колхозниксем строительство валли йывӑҫ хатӗрлеҫҫӗ. Вӑрманта 40 колхозник, 8 лаша, 2 автомашина ӗҫлет.

«Маяк» колхозпа ӑмӑртакан Ленин ячӗпе тӑракан колхоз та обществӑлла ҫуртсем лартма йывӑҫ нумай хатӗрлерӗ.

КОЛХОЗНИКСЕН КИЛНЕ—РАДИО

—Итлӗр, колхозри радиоузел калаҫать! — ҫакӑн пек сӑмахсемпе пуҫлать «Авангард» колхозри радиоузел вырӑнти передачӑсене. Микрофон умӗнче колхоз председателӗпе бригадирсем, ялхуҫалӑх специалисчӗсем, агитаторсем тухса калаҫҫӗ.

Радиоузел 400 точкӑна пӗрлештерсе тӑрать. Колхозниксем Мускавран, Шупашкартан паракан передачӑсене кашни кунах итлеҫҫӗ.

Районта ытти колхозсенче те радиофикаци ӗҫӗ саралса пырать. Юлашки вӑхӑтра «Авангард», «Свобода», Ленин ячӗпе тӑракан колхозсенче кӑна пин ытла колхозник килне радио кӗртнӗ.

КИНОВЕЧЕРСЕМ

Районти культура ҫуртӗнче тӗрлӗ ыйтусемпе киновечерсем ирттерме пуҫларӗҫ. Ҫак кунсенче ҫавӑн пек вечер медицина ыйтӑвӗсем тӑрӑх пулчӗ. Унта 300 ҫын ытла пухӑнчӗ. Вӗсем «Скарлатина», «Трахома» тата «Это не проходит бесследно» ятлӑ кӗске кинокартинӑсене курчӗҫ. Ҫак картинӑсенче кӑтартнӑ темӑсем тӑрӑх Л. Николаева, Л. Горбунова, О. Щербань врачсем вечера пынисемпе калаҫусем ирттерчӗҫ.

Ҫитес киновечера ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх ирттерме палӑртнӑ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Суд залӗнчен

Хулигана тӑватӑ ҫула хупмалла тунӑ

И. Н. Комисева социализмла пурлӑха ҫаратнӑшӑн судпа айӑпланӑ пулнӑ. Анчах та тӗрмерен таврӑннӑ хыҫҫӑн та вӑл тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе пурӑнма шутламан. 1955 ҫулхи июлӗн 24-мӗшӗнче Приволжски вӑрманпромхозӑн вӑрман пунктӗнчи столовая ӳсӗрпе пырса кӗнӗ те, усал сӑмахсем каласа вӑрҫма пуҫланӑ, Кудряшова кӑкӑрӗнчен ярса тытса, унӑн ҫийӗнчи кӗпине ҫурса пӑрахнӑ.

1955 ҫулхи октябрӗн 12-мӗшӗнче, ӳсӗрпе хӗрарӑмсем пурӑнакан общежитие пырса кӗрсе, вӑл усал сӑмахсем каласа вӑрҫнӑ, Терентьевӑна ҫапса янӑ, Иванов хушаматлӑ ҫыннӑн тумтирне ҫӗтнӗ, унтан каллех общежитие кӗрсе, Терентьевӑна пуканпа ҫапнӑ.

Ҫакӑн пек хулиганла ӗҫсем тунӑшӑн Комисева тытса хупнӑ.

Нумаях та пулмасть Шупашкар хулинчи 3-мӗш участокри халӑх сучӗ Комисева 4 ҫуллӑха тӗрмене хупма приговор йышӑнчӗ. Чӑваш АССР Верховнӑй Сучӗ, Комисев панӑ заявление пӑхса тухса, халӑх сучӗн приговорӗ тӗрӗс, тесе йышӑннӑ.

Ҫанталӑк

Шупашкарти Гидрометбюро пӗлтернӗ тӑрӑх, паянпа ыран (февралӗн 1—2-мӗшӗсенче) Чӑваш республикин территорийӗнче уяр ҫанталӑк пулмалла, вырӑнӗ-вырӑнӗпе тӗтре тӑмалла, ҫурҫӗр-хӗвелтухаҫӗнчен лӑпкӑ тата вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе вӑтам ҫил вӗрмелле. Температура ҫӗрле 36—41 градус, кӑнтӑрла 27—32 градус сивӗ пулмалла.

Малашнехи виҫӗ кун хушшинче улшӑнса тӑракан пӗлӗтлӗ ҫанталӑк пулмалла, юр ҫумалла мар. Вырӑнӗ-вырӑнӗпе тӗтре тӑмалла, тӗрлӗ енчен вӑтам ҫил вӗрмелле. Температура февралӗн 3—4-мӗшӗсенче ҫӗрле 31—36 градус, кӑнтӑрла—24—29 градус, февралӗн 5-мӗшӗнче—ҫӗрле 23—28 градус, кӑнтӑрла—19—24 градус сивӗ пулмалла.

Редактор заместителӗ П. Н. НИКОЛАЕВ.

Театр

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ февралӗн 1-мӗшӗнче—чӑвашла спектакль «Мещенсем», февралӗн 2-мӗшӗнче—чӑвашла спектакль «Ялти каҫсем», февралӗн 3-мӗшӗнче—вырӑсла спектакль «Персональное дело». Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуҫланаҫҫӗ.

Хулари тата республикӑри экрансем ҫинче

Венгрире туса кӑларнӑ ҫӗнӗ илемлӗ фильм



кӑтартма пуҫлаҫҫӗ.

Сценари авторӗсем—К. Шандор, П. Бачо,
Режиссерӗсем — Золтан Варкони, Карой Макк.
Композиторӗ — Ф. Фаркаш.

Рольсенче ҫаксем выляҫҫӗ: Ф. Бешшеней, Э. Шомоди, Ю. Комлош, Л. Унгвари тата ыттисем те.

Венгрин государство киностудийӗ 1955 ҫулта туса хатӗрленӗ.

Фильма Мускаври М. Горький ячӗпе тӑракан киностуди вырӑсла куҫарнӑ. Дубляж режиссерӗ Т. Лиознова.

ЛИБЕРИ РЕСПУБЛИКИ

Иртнӗ ҫулӑн юлашки кунӗнче, декабрӗн 31-мӗшӗнче, Либери столицине—Монровия хулине Совет правительствин делегацийӗ пынӑ. Делегацие ертсе пыраканӗ СССР Верховнӑй Совечӗн Союз Совечӗн Председателӗ А. П. Волков пулнӑ. Совет правительствин делегацийӗ унта Либери Республикин правительстви чӗннипе Либери Республикин президенчӗ Тамбэн тата вице-президенчӗ Толберт официальнӑй йӗркепе ӗҫе кӗнӗ май пулнӑ уява хутшӑнма кайнӑ.

Либери—Хӗвеланӑҫ Африкӑра, вӑл тинӗс хӗрринчи пысӑках мар ҫӗршыв. Ҫак ҫӗршывра пурӑнакан тӗп халӑх—негрсен йӑхӗсем. Халӑхӑн чи пысӑк пайӗ нумаях мар йышлӑ (20 пин ҫынна яхӑн) США-ран куҫса пынӑ негрсен ӑрӑвӗнчен тӑрать. Вӗсем Либерие 1822 ҫулта пырса, Америкӑн колонизаци обществи вырӑнти йӑхсен пуҫлӑхӗсенчен сутӑн илнӗ ҫӗрсем ҫинче вырнаҫнӑ.

Ҫав общество Америка плантаторӗсем тӗрлӗ сӑлтавсене пула чураран ирӗке кӑларнӑ негрсене Африкӑна куҫарнӑ. Вӗсене США-ра усрасшӑн пулман. Ҫапла вара, негрсене ирӗке кӑларас пирки Америка президенчӗ Линкольн прокламаци кӑлариччен 40 ҫул малтан Хӗвеланӑҫ Африкӑра чураран хӑтӑлнӑ Америкӑри негрсен пӗрремӗш ялӗ пулнӑ. Ҫав тапхӑртах Либерире, Сент-Пол шывӗн пырӗнче, Монровия хули пуҫланса кайнӑ. Каярахпа ҫав хула республика столици тата тинӗс порчӗ пулса тӑнӑ.

Малтанах Либери Америка колонийӗ пулнӑ, ӑна Америка губернаторӗ тытса тӑнӑ. Анчах 1847 ҫулхи июлӗн 26-мӗшӗнче Либери [illegible] пӑхӑнман республика статутне илнӗ, Америка ҫыннине Робертса, губернатор пулнӑскерне, Либерин пӗрремӗш президенчӗ тесе пӗлтернӗ.

Республика конституцийӗнче тӗп вырӑнта США конституцийӗн принципӗсене хунӑ. Конституци тӑрӑх государство пуҫлӑхӗ—президент, вӑл пӗр вӑхӑтрах правительствӑна та ертсе пырать. Президента сакӑр ҫуллӑха суйлаҫҫӗ. Ӑна тепӗр срокла та суйлаҫҫӗ пулсан, вара унӑн полномочийӗсем тӑватӑ ҫуллӑха кӑна пыраҫҫӗ. Либери Республикин хальхи президентне Уильям В. С. Табмэна ҫак вырӑна чи малтан 1944 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнче суйланӑ пулнӑ. Халӗ ӑна виҫҫӗмӗш хут суйланӑ. Вӑл—Либерин 18-мӗш президенчӗ.

Ҫӗршывра закон кӑларакан власть парламент аллинче. Парламентра сенат, представительсен палати тата ялсенче пурӑнакан негр-аборигенсен виҫӗ представителӗ пур. Сенатӑн 10 членне 6 ҫуллӑха суйлаҫҫӗ. Представительсен палатинче 31 депутат, вӗсен полномочийӗсем тӑватӑ ҫуллӑха пыраҫҫӗ. Негр-аборигенсен представителӗсем пулма виҫӗ провинцирен пӗрер ҫын суйлаҫҫӗ.

21 ҫула ҫитнӗ арҫынсемпе хӗрарӑмсем пурте суйлава хутшӑнма пултараҫҫӗ. Анчах суйлав правипе усӑ курас пулсан, вӗсен кашниннех «ҫителӗклӗ» таран пурлӑх пулмалла (ҫӗр участокӗ, кил-ҫурт, плантаци, банка хывнӑ укҫа т. ыт. те). Ҫав пурлӑх цензӗ чылай ҫынсене суйлав правипе усӑ курма май памасть.

Ҫӗршыв экономикинче ялхуҫалӑхӗ тӗп вырӑн йышӑнать. Анчах ҫав отрасль ҫителӗксӗр аталаннӑ-ха, тырпул лайӑх пулакан ҫӗр пур пулин те, Либери халӑхне апат-ҫимӗҫ ҫителӗклӗ таран парса тӑраймасть. Либери ҫыннисем хӑйсен уй-хирӗсенче маниока (вӑл тропикӑри ӳсентӑран, унӑн тымаррисемпе апат-ҫимӗҫ хатӗрленӗ ҫӗрте тата крахмал, спирт, ҫӑнӑх тунӑ ҫӗрте усӑ кураҫҫӗ), банан, сорго, ҫавӑн пекех ҫу тухакан пальмӑсем акса-лартса ӳстереҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси ҫителӗксӗр аталаннӑ.

Хуҫалӑхӑн чи паха отраслӗ каучук йывӑҫҫи лартса ҫитӗнтересси пулать. Каучук йывӑҫҫисен тӗп плантацийӗсем (22,5 пин гектар таран) Америкӑри «Файрстон тайр энд роббер компани» аллинче тӑраҫҫӗ. Ҫав компани 1926 ҫулта 400 пин гектар ҫӗр 99 ҫуллӑха тара илнӗ. Либери ют ҫӗршывсене пуринчен ытларах каучук-сырец сутать. 1951 ҫулта ӑна ытти ҫӗршывсене 37.162 тонна сутнӑ.

Либерире тимӗр тӑпри (унтан 68,8 процент тимӗр тухать), ылтӑн, марганец, графит, алмаз тата нефть тухакан вырӑнсем пур. Анчах ҫӗр айӗнчи пурлӑхсене сахал кӑлараҫҫӗ. Боми Хилри Америкӑпа Либерин «Либериа майнинг» компанийӗн тимӗр тӑпри кӑларакан предприятийӗсенчен 1953 ҫулта ют ҫӗршывсене 1,25 миллион тонна тимӗр тӑпри сутнӑ.

Ҫӗршывра тӗрлӗ япаласем туса кӑларакан промышленность ҫукпа пӗрех. Халиччен унта алӑсталӑх производстви (пир-авӑр тӗртесси, йывӑҫ, тимӗр япаласем, тир-сӑран тӑвасси) чылай аталаннӑ пулнӑ. Халӗ ҫав производство, урӑх ҫӗршывсенчи фабрикӑсенче туса кӑларакан таварсем илсе пырса сутнӑ пирки, вӑйсӑрланса юлнӑ.

Ют ҫӗршывсене, каучукпа тимӗр тӑприсӗр пуҫне, какаопа кофе пӑрҫи тата ылтӑн сутаҫҫӗ.

Ытти ҫӗршывсенчен пир-авӑр, металран тунӑ япаласем, апат-ҫимӗҫ (рис, типӗтнӗ пулӑ, орех, табак) кӳрсе пыраҫҫӗ.

Ҫӗршывра ҫул-йӗр питӗ ҫителӗксӗр. Пӗр пысӑках мар; 64 километр тӑршшӗ, чугун ҫул Боми Хилри тимӗр тӑпри кӑларакан предприятисене Монровия порчӗпе ҫыхӑнтарса тӑрать. Ҫавӑн пекех 900 километра яхӑн тӑпра купаласа тунӑ ҫул пур. Ҫӗршывра икӗ аэропорт: Робертсфилд (Африкӑри чи пысӑк аэропортсенчен пӗри) тата Джеймс Сприггс Пэйн-филд.

Либери Республики хӑйӗн тулашри политикинче колонисенчи тата пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенчи хӑйсен нацилле ирӗклӗхӗшӗн кӗрешекен халӑхсене хӳтӗлет.

1955 ҫулта Азири тата Африкӑри ҫӗршывсен Бандунгра пулса иртнӗ конференцийӗнче Либери Республики мирлӗ пурӑнмалли пилӗк принципшӑн тӑракан ҫӗршывсем ҫумне пӗрлешрӗ.

Монровие декабрӗн 31-мӗшӗнче пырса ҫитнӗ совет делегацийӗ Либери Республикин Президентне Тамбэн господина СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов янӑ послание панӑ. Ҫав посланире ҫапла каланӑ: «Сирӗнтен эпӗ Сире хӑвӑра тата Либери Республикин халӑхне чунтан саламланине тата ырӑ суннине йышӑнма ыйтатӑп. Ҫакна шанса тӑма ирӗк парӑр: Эсир СССР Верховнӑй Совечӗн Союз Совечӗн Председателӗпе А. П. Волковпа тӳррӗнех сыхӑну тытни икӗ ҫӗршыв хушшинче туслӑ сыхӑнусем йӗркелес ӗҫре пулӑшӗ».

Ответлесе каланӑ сӑмахра Тамбэн господин ҫапла каланӑ: пӗр-пӗрипе тӳррӗнех сыхӑну тытни халӑхсем хушшинче пӗр-пӗрне лайӑхрах килӗштерсе пурӑнма, халӑхсем хушшинче туслӑ хутшӑнусем тӑвассине кансӗрлекен чӑрмавсене сирсе пӑрахма пулӑшать. Вӑл ҫапла кӑтартса панӑ: ытти халӑхсем мирлӗ пурӑнма, пӗтӗм тӗнчери мир интересӗсемшӗн пӗр-пӗрне килӗштерсе ӗҫлеме тӑрӑшнине Либери халӑхӗ ӑнланать, тенӗ.

Совет халӑхӗпе Либери халӑхӗ хушшинчи туслӑха тата сыхӑнӑва малалла аталантарса пыни пӗр-пӗриншӗн усӑллӑ пулӗ тата мир ӗҫне пулӑшӗ.

М. ПАВЛОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—4-17, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, обзорсен пайӗ—6-84, пропаганда пайӗ—5-21, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—3-04, совет строительстви пайӗ—3-04, литературӑпа искусство пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—3-54, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 00622 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР, Заказ № 16. Тираж 37.000 экз.